# Ял тăрăхĕсенче хĕрарăмсене куçса çӳрекен маммограф кĕтет ● 3 стр.

*Анне, аппа та йăмăк, мăшăр... Эсир пуртан кил-çуртăм ăшă*

ХЫПАР

1997 çулхи январĕн 30-мĕшĕнче тухма пуçланă

# Чăваш ХĔРАРĂМĔ

26(896) №, 2015, июль/утă, 4

Хакĕ ирĕклĕ. 16+

Хаçата электронлă адреспа та çыру çырма пултаратăр: zuwxeraram@mail.ru.

ÇĂЛТĂР ÇӲПÇИ

## Тĕрĕллĕ кĕпине тăхăнма пĕлмелле



Ирина АРХИПОВА, ЧР тава тивĕçлĕ артистки

Театрта 22 çул ĕçлетĕп. Артистшăн яланах куракан нумай пулни, пирĕн ĕçе хаклама пĕлни, алă çупса хавхалантарни лайăх. Шел те, театра кăмăллакан ачасем çавах сахалрах. Спектакль ырри патне туртăнма, йывăрлăха сирме, лайăххине ăша хывма вĕрентнине аслисем ăнланса илсен пирĕн куракансем татах та йышланĕччĕç. Шăматкунпа вырсарникун шăпăрлансем валли вылятпăр. Паллах, кану кунĕсенче ачасем шкултан мар, ашшĕ-амăшĕпе пĕрле килеççĕ. Аслисем тĕпренчĕкĕсенчен те ытларах савăннине сцена çинчен сăнама питĕ кăмăллă. Ашшĕ-амăшĕн чунĕсенче чул чăмакки мар апла. Пирĕн пата Шупашкарти 19-мĕш тата 47-мĕш шкулсенчи вĕренекенсем час-часах çӳреççĕ. Вĕсем хăйсене театрта йĕркеллĕ тытма хăнăхса çитнĕ ĕнтĕ. Спектакль вăхăтĕнче телефон сӳнтермеллине, шăпшăпăрт лармаллине асăрхаттармасăрах лайăх пĕлеççĕ. Кун пек чухне пире те выляма çăмăл.

Чăваш хулинче мĕншĕн чăвашла калаçас мар? Халĕ ĕлĕкхи пек никам та тĕлĕнсе пăхас çук. Троллейбус-автобусра та чăваш сасси илтĕнет. Лавккасене кĕрсен хама кирлĕ апат-çимĕçе, тавара тăван чĕлхепех ыйтатăп. Ман çине сивĕнрех пăхса илсен йăл кулатăп та тӳрех вырăсла калаçма пикенетĕп. Апла вăл пирĕн чĕлхене ăнланмасть, унпа мĕншĕн тавлашăва кĕрес? "Кунта чăвашла та калаçатпăр" тесе çырнине курсан чунра ăшă пулса каять. Унашкалли халь Шупашкарта чылай çĕрте пур.

Чăваш тумĕллĕ пикесене уявсенче кашнинчех сăнатăп. Тĕрĕллĕ кĕпине тăхăнаççĕ-ха, анчах та хăшĕ-пĕри çӳçне пуçтарма пĕлмест. Пĕрре те хитре мар çакă. Чăваш кĕпиллĕ пикен çивĕтпе çӳремелле е çӳçе тирпейлĕ çыхса ямалла. Сапаланчăк, арăш-пирĕш пулни ытла та сăпайсăр. Урари уçă пушмак та килĕшӳллĕ мар. Ахальтен: "Илемлĕ, илемлĕ, илемлĕ чăваш кĕпи те, тăхăнма пĕлсен кăна", – тесе юрламан пуль вăйăра?

● "Вилнĕ" тесе пăрахса хăварнăскер тыткăна çакланнă 2 стр.

● Салтака та илмеççĕ, ĕçе те... 5 стр.

● Иммун тытăмне, юн тымарĕсене çирĕплетме 8 стр.

● Юрламасть текех садра саркайăк... 9 стр.

● Чăрсăр та пултаруллă тутар анаçа ташăпа парăнтарнă 11 стр.

## Вăрманта, çăтмахра...





**Вĕçĕ-хĕррисĕр вăрман варринче – пысăк уçланкă. Унăн пĕр кĕтессинче Ясная Поляна поселок вырнаçнă. Ку тăрăхри ялсем те çаплах калаççĕ ăна, Чăваш Республикин картти çинче те, словарьте те çавнашкалах палăртнă. Вырăнта пурăнакансем, Вăрманхĕрри тата Нăрваш Шăхальсем, тата çепĕçрех те хитререх ят панă – Апрушнай ялĕ. Ăçтан илнĕ ăна кунта пурăнакансем – никамах та лайăх пĕлмест. Апăрша уйĕ тесе шутлакан та пур-мĕн. Пыллăх ĕшнипе, çырма-çатрапа, улăх-çаранпа çыхăнтарнă-и тен? Çулталăкăн кирек хăш вăхăтĕнче те тĕлĕнмелле илемлĕ кунта. Акă ăçта вăл чăн-чăн çăтмах! Ял мар, чăн-чăн кану вырăнĕ тейĕн. Асфальт çул Апрушнайнех çитет. Кунта клуб та, лавкка та пур. 2008 çулта поселок «Районти чи лайăх ял» ята ахальтен çĕнсе илмен иккен.**

4 стр.

Апрушнай ялĕ 1928 çулта пуçланса кайнă. Нăрваш Шăхалĕнчен çичĕ пĕртăван куçса ларнă теççĕ. Малтан çĕр пӳртсенче пурăннă, кайран вăрман касса пĕрин хыççăн тепри йăва çавăрма тытăннă. Ялта чи малтанхи пураллă çурт паянхи кунччĕнех сыхланса юлнă. Çĕнĕ вырăна Каçал тăрăхĕнчи Нĕркеçри Суяргинсем те килсе тĕпленнĕ. Кирпĕч çапса пурăннă теççĕ вĕсем пирки. Батановсем /ирçесем/ хурăнтан тикĕт, йывăç тымарĕсенчен кăмрăк хатĕрленĕ. Паян вĕсен тăван-пĕтенĕ ялта юлман та ĕнтĕ. Хĕрĕсем виçĕ çухрăмра вырнаçнă Шăмăршă районĕнчи Карапай Шăмăрша качча тухнă.

### Тус-тăванлăхпа юрату çинче...

Эпир çитнĕ кун ял старости Геннадий Федоров вăрмана вутă хатĕрлеме кайнăччĕ. Пире унăн мăшăрĕ Раиса Ильинична кĕтсе илчĕ.

Федоровсем çамрăк чухне Шупашкарта пурăннă. Тивĕçлĕ канăва тухсан ачаран ӳссе вăй илнĕ ялах килме тĕв тунă. Хăйсем çуралса ӳснĕ вырăнта мăшăрĕпе хитре çурт-йĕр, хуралтăсем çавăрнă. «Тăван тăрăха ытараймасăр хуларан каялла таврăнтăмăр çав. 26 çуртран 17-шĕнче пурнăç кĕрлет паян. Пĕр-пĕринпе калама çук туслă пурăнатпăр. Туй-çуйне, Мăнкунне, Çĕнĕ çулне тата ытти мĕнпур уявне пĕрле ирттеретпĕр. Салтака та ăсататпăр, тĕне те кĕртетпĕр, ача та çăватпăр... Сурăх çăмне те эртелпе илетпĕр. Эпир кунта тăвансем пек. Кама та пулин пулăшмалла тăк урамĕпех тухаççĕ – никам та итлемесĕр тăмасть, айккинче тăрса юлакан та çук. Çак кунсенче пĕри çырлана кайма тесе трактор тапратнăччĕ, мĕнпур ял тиенсе кайрĕ вĕт вăрмана. Пур – пĕрле, çук – çурмалла. Туслăх пĕрлештерсе тăрать пире. Ырлăх курса пурăнатпăр çак уçланкăра», – хавхаланса каласа кăтартать Раиса Ильинична. Ĕçчен те тарават Рая аппа пире те вăрман кучченеçĕпе – хура çырлапа – хăналарĕ. Хăйсем валли çеç мар, хăнана килекене парса яма та татса хураççĕ ăшă та ырă кăмăллăскерсем.

САНТАЛĂК

| | кăнтăрла | çĕрле |
|---|---|---|
| 04.07 | + 22 | + 15 |
| 05.07 | + 20 | + 18 |
| 06.07 | + 15 | + 14 |
| 07.07 | + 16 | + 10 |
| 08.07 | + 17 | + 13 |
| 09.07 | + 23 | + 14 |
| 10.07 | + 24 | + 18 |



АСЛĂ ÇĔНТЕРӲ: 70 ÇУЛ

# Ветеран Шоссе урамĕнче... шоссе çулпа утасшăн

**Шупашкар районĕнчи Пархикассине тĕп хула вокзалĕнчен туххăмрах çитрĕм. Ял çыннисем Курбаткинсен çуртне кăтартса ячĕç. «Пирĕн тăрăхра – пĕртен-пĕр вăрçă ветеранĕ. Вĕсем пек нумай çул пĕрле пурăнакан мăшăр та урăх çук», – сăмах пуçарчĕ манпа ял-йыш.**

**Шоссесĕр... Шоссе урамĕпе утатăп. Тĕлĕнтермĕш мар-и çакă? Юрать-ха çумăрлă пулмарĕ, унсăрăн çӳллĕ кĕлеллĕ пушмакпа çитсе те кĕреймĕн. Ахальтен мар йĕпе çанталăкра çынсем федераци трассинчен пăрăнсанах пылчăк çăрма пуçланине пытармаççĕ.**

### Киле – Тав çырăвĕпе

«Василий Иванович... Чапаев пекех...» – алă тытрĕ 96-ри вăрçă ветеранĕ. Унтан мăшăрĕ çумне вырнаçса ларчĕ вăл. Курбаткинсем пĕрле пурăнма пуçлани – 50 çул. Пĕр-пĕрне упраса çак вăхăта çитнĕ те вĕсем. Çак мăшăр çинчен çырса та, каласа та пĕтереймĕн. «Мана упăшка нихăçан та кӳрентермен. Килте сасă хăпартса калаçса курман», – мăшăрĕ çине юратса пăхать хĕрарăм. Елена Григорьевна 43-ре – Тамарăна, 44-ра Луизăна çут тĕнче кăтартнă. Халĕ тĕпренчĕкĕсем ашшĕ-амăшне пăхсах, хавхалантарсах тăраççĕ.

Унччен те пулмарĕ, мăнукĕн ачи Иван чупса çитрĕ, çулталăкран иртнĕскер Василий Ивановичпа Елена Григорьевнăна выляттарма пуçларĕ. «Пĕчĕкскер 8 уйăхранпах утать, мăн кукашшĕпе мăн кукамăшĕ пекех правур вăл», – теççĕ ун пирки килтисем.

Нумаях пулмасть Курбаткинсен мăнукĕ Ян Михайлов хĕсметран таврăннă. Вăл та кукамăшне Курбаткинсен курма çитрĕ. Салтака юрăхлă ăру çитĕнтернĕшĕн тивĕçлипех мăнаçланаççĕ ватăсем. «Кукаçу пек таса чунлă, çирĕп кăмăллă пул», – пехил панă ăна çара ăсатнă чух. Тăван тăрăха Тав çырăвĕпе килнĕ вăл.

Пурте пĕрле пахча илемĕне килентĕмĕр. Йĕри-таврари тĕрлĕ тĕслĕ чечек кирек камăн кăмăлне те çĕклĕ. Çамрăксем çакăнтах канмалли вырăн хатĕрлеççĕ. Калаçса лармалли уйрăм кĕтесе сăрлама пуçланăччĕ вĕсем. Унта аслă ăру çыннисене те хăтлă, канлĕ пулĕ.

### Ир тăракан тутă пулнă

Тахçан малтан çак йăх Андреев хушаматпа çӳренĕ. Василий Ивановичăн ашшĕ хăйне килĕшекен Курбаткин хушамата 50 пин тенкĕпе илнĕ.

Шăпа Василин çирĕплĕхне пĕчĕкренпех тĕрĕслеме пуçланă. 3 çултах амăшĕсĕр юлнă вăл. Çапах шăпа кӳрентермен ăна. Арçын ачана амаçури Марфа Ивановна юратса çитĕнтернĕ. Курбаткинсен ачисем хĕвелпе тăрса ĕçе пуçăннă, унтан шкула васканă.

«Аттепе вутă татса çӳреттĕмĕр. Пĕрре столовăй çынни повара вĕренме сĕнчĕ», – аса илет Василий Курбаткин. Çемье пуçне те килĕшнĕ çак шухăш. Çаврăнăçуллă çамрăк повар, электромонтер профессине алла илнĕ. Çак ăсталăха ăша хывни ĕмĕр тăршшĕпех кирлĕ пулнă ăна.

### Тăн çухатнисене... тыткăна

Василий Курбаткина 1941 çулхи çĕртме уйăхĕнчех Тăван çĕршывăн Аслă вăрçине илсе кайнă. «Вăл каласа кăтартнине куççуль витĕр итлеттĕм», – тет хурланса Елена Григорьевна.

Çула тухнă салтаксемпе лашасене пĕр вакуна вырнаçтарнă. Çичĕ класс пĕтернĕ Василий Ивановича связиста вĕрентнине те палăртса хăварас килет. Çĕршыв хӳтĕлевçисемпе пĕрле Беларуç тăрăхне çитсе тухнă вăл.



Тĕппипех çунтарса янă ялсем яланлăхах салтаксен асĕнче юлнă.

Тĕтĕм тухнине курсанах нимĕçсем бомба пăрахнă. Çаванпах кăмака хутса ăшăнма та май пулман. Шартлама сивĕре юр çинче выртни те сывлăха усал витĕм кӳнĕ.

Пĕрре беларуç ялĕнче çакнашкал пăтăрмах пулса иртнĕ. Çĕвăнса тасалнă 28 нимĕç мунчара выртса çывăрнă. Тăшман хуп турттарма пуçласанах тĕтĕм çулне пӳлсе хунă кил хуçи. Ирхине нихăшĕ те вăранайман. Совет салтакĕсем вĕсене хире кăларса юрпа витнĕ. Хĕç-пăшалне хăйсене илнĕ.

«Хăш чухне окопран тухма та май çукчĕ. Хырăмпа шуса апат илме каяттăмăр», – калаçăва тăсать çĕнтерӳçĕ-салтак.

Беларуçа ирĕке кăларассишĕн пынă хĕрӳ çапăçура Василий Ивановича хытах амантнă. Çурăм шăмминчи суран халĕ те хăй çинчен аса илтерсех тăрать ăна.

Тем тесен те телейлĕ çăлтăр айĕнчех çуралнă Василий Курбаткин. Связиста, пулеметчика, разведчика тăшман тĕп тăвайман. Пĕррехинче вĕсем нимĕç офицерне тыткăна илнĕ. Хайхискер совет çарĕшĕн пĕлтерĕшлĕ информаци пĕлтернĕ. Çакăншăн разведчиксене «Паттăрлăхшăн» медальпе наградăланă. Çавнашкалах Тăван çĕршыв вăрçин орденне те тивĕçнĕ чăваш.

...Тăн çухатнă Василий Ивановича санитарсем вилнĕ тесе çапăçу хирĕнчех хăварнă. Ун чухне чунĕ тухнă салтаксене вăхăтра пытарма та ĕлкĕреймен. Нимĕçсем çавсен хушшинче чĕррисене шыранă, кайран вĕсене лагерьсене ăсатнă. Шăпах çапла лекнĕ те тыткăна Василий Курбаткин. 1942 çулхи çĕртме уйăхĕн 20-мĕшĕнче чăн тамăк пуçланнă уншăн. 1945 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕччен мĕн кăна курман-ши вăл? «Кунне 200 грамм çăкăр, витĕр курăнакан яшка паратчĕç. Пĕр вырăнтан тепĕр çĕре куçарса кайнă вăхăтра вырăнти ыçăлах пурăннă. Çи-пуç та çĕтĕлсе пĕтнĕ, кăшт тăхăнкаламалăх пултăр тесе саплăк çине саплăк лартаттăмăр. Совет салтакĕсене пăшал приклачĕпе хĕнетчĕç», – нушаллă çав вăхăта аса илсен çаплипех куççульленет ветеран.

Тыткăнри салтаксене Польшăна хăваласа кайнă вăхăтра тарса та пăхнă Василий Иванович. Тепĕр салтакпа иккĕшĕ полякран çăкăр ыйтнă та лешĕ вĕсене тыттарса янă. Кайран каллех Германие çуран илсе кайнă салтаксене. Çул çинче çитермен. Тырă пучахĕпе, купăста çулçипе хырăм выçнине иртернĕ мăнтарăнсем. Çапах та совет çарĕ çĕнтерессе шанса чăтнă. Паллах, хăçан та пулсан тăнăç пурнăçпа пурăнма ĕмĕтленнĕ вĕсем.

Кайран тыткăна лекнисене хытах тĕрĕсленĕ. Çакна та концлагерьте пулнисенчен никамăн та куç умне кăларас килмĕ. Хăрушсăрлăх служби Василий Ивановича айăпламалли сăлтав тупайман.

Вăрçă хыççăн та чылай вăхăт госпитальте сипленме тивнĕ унăн. Хăй вăхăтĕнче хытă шăннăран ури çине тухнă мăкăльсем канăç паман ăна. Çамрăк тухтăрăн кашни сăмахне ас тăвать Василий Иванович.

– Вăрăм ĕмĕрлĕ пулас килет-и? Апла тăк туртма пăрахмалла, эрех ĕçмелле мар, – сĕннĕ шурă халатли.

– Унăн ятне-шывне, адресне пĕлнĕ пулсан тав туса çыру ярăттăм, – тет шурă çӳçлĕ ветеран.

### Ферма хĕрĕ

«Пӳрт хăпартнă чухне пички-пичкипе эрех хатĕрленĕ. Анчах кил хуçи ăна сыпса та пăхман. Халĕ те Çĕнтерӳ кунĕпе саламлама парнесемпе килеççĕ. Ĕçмелли те, çимелли пур унта. Мăшăрăм эрех черкки тытмасть те», – çирĕплетсе калать Елена Григорьевна. Хăй çакăншăн савăннине пытармасть.

Унăн та шăпи çăмăл килмен. Инкĕшĕ çамрăклах çĕре кĕнĕ. Пиччĕшĕн сакăр ачине пăхма пулăшнă хĕр. Пĕве кĕрсен ĕне, сурăх, сысна фермисенче вăй хунă. Нихăш ĕçрен те хăраман çамрăк: 35-40-шер ĕне сума тивнĕ унăн.

Вăрçă вăхăтĕнче те çăмăл пулман тыл ĕçченĕсене. Апат-çимĕç кăна мар, пӳрте ăшăтма вутă та çитмен. 1943 çулта килте – амăшĕ, çапăçу хирĕнче пиччĕшĕ çут тĕнчерен уйрăлнă. Тата ĕни те ӳксе вилнĕ. Çĕр йăтăмни хуйхă йăтăнса аннăшăн мĕнешкел куляннă хĕр. Юрать-ха «Коммунизмшăн» колхоз ертӳçи пушмак пăру панă ăна.

### Юратма та пĕлмелле

«Ачасем, мăнуксем çурални, аслă пĕлӳ илни, ĕçе вырнаçни – пурнăçри чи савăнăçлă самантсем», – тет Василий Иванович. Тĕпренчĕкĕ чирлесен унпа пĕрле больницăра та выртнă арçын. «Больницăра сивĕччĕ те хĕрĕме хам хырăм çине вырттарса ăшăтаттăм», – пытармасть ашшĕ. Кайран килтен утиял та илсе пынă.

Мăшăрне савăнтарма пусма, тутăр илсе панă кил хуçи. Пĕрре япала тупса илме йывăр вăхăтра Ишлей лавккине кĕнĕ вăл. Унта утиял сутнине курнă. «Пĕри 10 тенкĕ тăратчĕ. Тӳрех тăваттăшне чĕркеттертĕм – илме укçи çитмест. Юрать-ха хамăр ял хĕрарăмĕ кивçен пачĕ. Килтисем çĕнĕ япаласемшĕн мĕнешкел хĕпĕртерĕç. «Хальлĕхе нихăшне те тытмалăр. Çĕн пӳрт хăпартсан кирлĕ пулĕç», – шухăш тытнă Елена Григорьевна», – хальхи пекех астăвать Василий Курбаткин.

Кил хуçи вăрмантан пĕрене-сем турттарма, хăма çуртарма пуçланă. Нимелле хăвăртах пысăк пӳрт хăпартнă вĕсем. Халĕ çамрăксем çĕнетсех, хăтлăлатсах тăраççĕ ăна. Лайăх пурăнмашкăн йăлтах çителĕклĕ.

«Тăвансене хĕрхенмелле, пулăшмалла. Вăй çитнĕ таран ĕçлемелле. Укçана перекетлĕ тытмалла. Ваттисене хисеплемелле. Эрех ĕçни, пирус туртни ырри патне илсе çитермест. Сывă пурнăç йĕркине пăхăнмалла», – ăса вĕрентсе калаççĕ вăрăм ĕмĕрлисем. Тата чунран юратма, пуррине упрама пĕлмелле. Сăмах май, вĕсен иккĕшĕн те ĕç стажĕ – 40 çул ытла.

«Пурăнас, мăнуксен ачисем çитĕннине курас килет», – малашлăх пирки сăмах пуçарсан палăртрĕç Василий Ивановичпа Елена Григорьевна. Телей кайăкне ĕмĕр тăршшĕпех алăран вĕçертмен килĕшӳллĕ çак мăшăр.

**Çапах шоссесĕр урам патне тепĕр хут таврăнас килет. Василий Ивановичпа унăн хĕрĕ ял тăрăхĕн депутачĕ Луиза Васильевна асфальт çул сармашкăн укçа уйăрма ыйтса республика Пуçлăхĕн тивĕçĕсене вăхăтлăх пурнăçлакан Михаил Игнатьев тата депутатсем патне ямашкăн çырусем хатĕрленĕ. Пархикасси ял халăхĕ вĕсен шухăшне ырласа алă пуснă. Тăван çĕршывăн Аслă вăрçин ветеранĕ Василий Курбаткин Шоссе урамĕнче шоссе çулпа утма ĕмĕтленет.**

**Марина ТУМАЛАНОВА.**

Автор сăнӳкерчĕкĕ.



ФОРУМ

# Тăватă çĕнтерӳçĕ

**Самар облаçĕнче иртнĕ "iВолга-2015" форум çак кунсенче хупăннă. Ăслăлăхпа çыхăннă куравсенче Атăлçи тăрăхĕнче пурăнакан çамрăк ăсчахсен ĕçĕсемпе паллашма май пулнă.**

Форума килнĕ çамрăк ăсчахсем, хастарсем грант çĕнсе илме конкурса проектсем тăратнă. 2200 ĕçрен 57-шĕ малти вырăнсене йышăннă. Кăçал грант фончĕ 11 миллион тенкĕпе танлашнă. Малти вырăнсене йышăннисем РФ Президенчĕн федерацин Атăлçи тăрăхĕнчи полномочиллĕ представителĕ уйĕнче хăйсен проекчĕсене хӳтĕленĕ. Çĕнтерӳçĕсене форум хупăннă кун палăртнă. 1-мĕш вырăна тухнисем 300 пин тенкĕ илме тивĕçнĕ. "iВолга-2015" форума хутшăннисенчен 18-шĕ Байконур космодрома каймашкăн сертификатлă пулнă.

57 çĕнтерӳçĕрен 4-шĕ – Чăваш Енрен. "Политика" сменăра проект хӳтĕленĕ Роман Васильев 3-мĕш вырăн йышăнса 150 пин тенке тивĕçнĕ. "Инноваципе техника пултарулăхĕнче" 2-мĕш вырăна тухнă Николай Иванов 200 пин тенкĕллĕ пулнă. Эдуард Степанова 150 пин тенкĕпе хавхалантарнă. Диле Тимруковăн ĕçĕ 400 пин тенкĕпе танлашакан гранта тивĕçнĕ.

**Елена МИШИНА.**

СЫВЛĂХ

# Поликлиника регистратурăран пуçланать

**ЧР Сывлăх сыхлав министерстви Пĕтĕм Раççейри республика тапхăрĕн "Поликлиника регистратурăран пуçланать" конкурсне пĕтĕмлетнĕ. Ăна чирлисене йышăнас шая ӳстерес тата медицина учрежденийĕн имиджне хăпартас тĕллевпе йĕркелеççĕ.**

Кăçалхи пуш уйăхĕнчен пуçласа çынсене анонимлă майпа анкета çыртарнă. Хак панă чухне хальхи условисене, хутшăну саманчĕсене шута илнĕ. Регистратура ĕçне çавнашкалах республикăри Сывлăх сыхлав министерстви йĕркеленĕ ĕç ушкăнĕ тĕрĕсленĕ.

Конкурсăн иккĕмĕш тапхăрĕнче Ф.Г.Григорьев ячĕллĕ Канаш район тĕп больници, Хула клиника 1-мĕш больници, Президент перинаталь центрĕ чи нумай балл пуçтарнă. Вĕсем республика, район, хула сывлăх учрежденийĕсен хушшинче мала тухнă. Çапах халăхăн тата конкурс комиссийĕн юлашки пĕтĕмлетĕвне тĕпе хурса Пĕтĕм Раççей конкурсне хутшăнма тивĕçлĕ чи лайăх сывлăх учрежденине палăртнă. Çавна май Шупашкар хула клиника 1-мĕш больници çинчен пуçтарнă информацие РФ Сывлăх сыхлав министерствине ярса парĕç. Конкурса юпа уйăхĕн 1-мĕшĕччен пĕтĕмлетĕç.

**Марина ТУМАЛАНОВА.**

# Усал шыçă ан аталантăр

**Кăкăрти усал шыççа малтанхи тапхăрта тупса палăртас тĕллĕшпе хатĕрленĕ республика проекчĕ пурнăçа кĕрсе пырать. Кусса çӳрекен хальхи йышши маммограф комплексĕ чылай ял тăрăхĕнче пулнă.**

Çĕртме уйăхĕнче кăна 705 хĕрарăмăн кăкăрне тĕрĕсленĕ. Вĕсенчен улттăшĕн рак пуçланас хăрушлăх пуррине палăртнă. Çав хĕрарăмсене Республикăри клиника онкологи диспансерĕнче тепĕр хут тĕрĕслĕç. Унсăр пуçне 54-шĕн кăкăрĕнче тĕрлĕ чир аталанма тытăнни паллă пулнă. Кăçалхи нарăс уйăхĕнчен пуçласа 4801 хĕрарăм тĕрĕслев витĕр тухнă, вĕсенчен 54-шĕнне усал шыçă тупнă. Республикăри клиника онкологи диспансерĕн тĕп тухтăрĕ Лидия Воропаева каланă тăрăх, чире малтанхи тапхăрта тупса палăртни вилекенсен йышне чакарма пулăшать.

Аса илтеретпĕр, 39 çултан иртнĕ хĕрарăмсен çулсерен маммографи тĕрĕслевĕ витĕр тухмалла. 21-рен иртнисене кăкăра хăйсен тĕллĕн тĕрĕслеме тата УЗИ пăхтарма сĕнеççĕ. Диспансеризаци вăхăтĕнче те кăкăра тĕрĕслеттерме май пур. Мĕн те пулсан канăçсăрлантарсан май пур таран хăвăртрах тухтăрпа çыхăнмаллине манмалла мар.

**Мария РОМАНСКАЯ.**

НАРКОТИК

# Тупăш кӳреймен лаборатори

**Чăваш Ен полицейскийĕсем "спайссен" пысăк вищине салатакан арăмĕпе упăшкине тытса чарнă. Вĕсен çумĕнче синтетика наркотикĕн 5 пин дозине хатĕрлеме пулакан 600 грамм наркăмăшлă япала тупнă.**

Мăшăра Шупашкарта çу уйăхĕн вĕçĕнче ЧР ШĔМĕн наркотиксен саккунсăр çаврăнăшне хирĕç ĕçлекен пайĕн ĕçченĕсем асăрханă. Саланнă союзăн пĕр республикинчен килнĕскерсем пирĕн тăрăхра аван тупăш илесшĕн пулнă. Çавăнпах тара ярса пурăнакан хваттерте вĕсем хăйне евĕр лаборатори йĕркеленĕ. Унта арçынпа хĕрарăм "Спайс" хатĕрленĕ.

Мăшăр, вĕсем 22-сенче çеç-ха, тĕллĕшпе уголовлă ĕç пуçарнă. Вĕсене саккунсăр майпа наркотик хатĕрлесе упранăшăн, сутнăшăн айăплаççĕ.

Раççей наркотĕрĕслев службин ĕçченĕсем çĕртмен 1-7-мĕшĕсенче çеç наркотик çаврăнăшĕн пысăк темиçе çулне пӳлнĕ, 24 наркопритона хупнă. Саккунсăр çаврăнăшран 14,2 килограмм героин, 10 килограмм гашиш, 42,4 килограмм марихуана, 59,6 килограмм синтетика тата 3,4 килограмм психотроплă япала туртса илнĕ. Вĕсенчен 2,4 миллион доза хатĕрлеме пулать.

Чăваш Енре вара "Мăкăнь" операци пырать. Ăна наркăмăшлă ӳсен-тăрана кирревсĕр йăла валли усă курасран асăрханас тĕллĕшпе ирттереççĕ. Мăкăньпе кантăр çын акман вырăнта ешернине е пахчара ятарласа ӳстерекенсене тĕрĕслеççĕ, тĕп тăваççĕ. Мăкăне саккунпа килĕшӳллĕн ятарлă лицензипе наука, вĕренӳ тата промышленноç тĕллевĕпе çеç ӳстерме юрать.

**Татьяна НАУМОВА.**

СĂМАХ ПАРĂР-ХА

# Килекен те пур çак тĕнчене, каякан та...

**Маргарита ИЛЬИНА**

**Çут тĕнчене килетпĕр те<br>каятпăр...<br>Асрах пĕр вăхăт тытĕç<br>тăвансем.<br>Шуса иртет те темиçе çултапăк<br>Тĕксĕмленсе çухалĕç<br>сăнарсем...**

**Пĕччен килсе пĕччен каять çак тĕнчерен çын... Чун кĕлеткепе сывпуллашнă самантра, ах, чи çывăх çынсене мĕнешкел юнашар пултарас килет! Тăвăлса-тăвăлса, хĕсĕнсе-хĕсĕнсе килет те, ак тĕлĕнтермĕш! çывăх тăван е мăшăр куçран пăхсан, алăран сĕртĕнсен темĕнле çăмăлланса кайнă пек пулать. Çук, чун ирĕке тухса кайнипе мар, лăпланнипе, тен, хĕпĕртенипе те? Ара, эсĕ хальлĕхе пĕччен мар, тăванусен хушшинчех, чĕрĕ çынсен çумĕнчех. Явап тытмалли вăхăт та халех, çак самантрах, мар-ха... Пушшех те тутана чĕрĕлĕх кĕртекен шĕвек – шыв – перĕнет те чăнласах лайăх пулса каять... "Чун кĕрсех кайрĕ", – тет кун пек чухне чăваш. Çав юлашки сывлăш тухма таппанă самантра чун тени кĕлеткен хăш пайне тарать-ши? Кăкăрта марах вăл ун чухне /темшĕн чун кăкăрта вырнаçнă пек туйăнать – йывăр самантра шăпах çавăнта тем хĕсĕнсе ларать-çке.../ Шыва ахальтен мар пурнăçпа танлаштараççĕ. Этем аптраса ӳксен те хăвăртрах шыв пама хушаççĕ. Аптранă хыççăн тăна кĕрсен те çын нимĕн те мар, чи малтан шыв ыйтать... Çапла тумламăн-тумламăн каялла – кĕлеткене – сăрхăнать пурнăç, чун хăйĕн вырăнне вырнаçать. Тинех лăш сывласа яма та юрать...**

**Пурнăçпа вилĕм чухлĕ калаçтаракан ыйту çук пуль текех. Ăнланмалла марри, эпир халĕ те пĕлсе çитерейменни ытла та нумай унта. Иккĕшĕн хушши ытла та кĕске-çке. Паян кăна пурччĕ этем. Ыранхи кун пирки ĕмĕтленетчĕ, çитес вăхăтри ĕçсене палăртатчĕ. Çаврăнса пăхнă çĕре – çук та... Тахăш самантра ку тĕнчерен яланлăхах уйрăлса ĕлкĕрнĕ. Шăппăн. Никама канăçсăрлантармасăр. Ĕнтĕ пуçланă ĕçĕсем те вĕçленеймен, çурчĕ те, картишĕ те, пахчийĕ те тăлăха юлнă... Тăлăха юлнă çывăх çыннисем темеллеччĕ те пулĕ, анчах юлнисен – малалла. Ыран та хĕвел тухать вĕсемшĕн. Ыран та тĕрлĕ çĕре çитсе вун-вун ыйту татса памалла чĕррисен, вĕсене татах та вун-вун тĕлпулу кĕтет. Çапла майĕпенех манăçать, пирчет чĕрери суран.**

**Масар çинче кăна шăп... Кунта ĕмĕрлĕх канăç тупнисен кăна ниçта та васкамалла мар. Çил кăна пăсать кунти шăплăха. Тем тулашать, тем çĕтĕлет, улать, нăйкăшать, макăрать. Макăрмасăр – хăшĕ-пĕри ытла та васкать-çке канлĕх шырама, ытла та ирех килсе выртать кунта. Вĕсене, ирех килнисене, ура çине тăратас пек йывăç тураттисемпе те пулин сĕртĕнет вĕр-çĕнĕ палăкĕсенчен çил. Кăлăхах. Унтан каялла çул çук...**

**Масар çине тăтăшрах та тăтăшрах утать ял халăхĕ. Сукмака курăк витсе те ĕлкĕреймест. Паян кăна пĕрне юлашки çула ăсатнăччĕ, ыран татах халăхра усал хыпар сарăлать. Пĕр кунра икĕ шăтăк та чавма тивет... Чи хăрушши – вăй питти çынсен ячĕсене тăтăшрах çырма тивет палăксем çине. Шăтăк чаваккансен хушшинче те çурри – хусах... Авланса та курманскерсем, çемье çавăрас шанăçне те çухатнăскерсем. Тин вĕсен килĕсенче ача сасси илтĕнесси иккĕленӳллĕ. Такамран та сăмах лекетха вĕсене çакăншăн – амăшĕнчен, тăванĕ-пĕтенĕнчен, çемьеллĕ юлташĕсенчен. Вилме выртсан кам шыв парĕ? Юлашки аргумент ку... Унран хăрушăраххи нимĕн те çук. Анчах та лару-тăру улшăнмасть... Ватăлсах, катăлсах пырать ял.**

**Юрать-ха юлашки 1-2 çул хăть хулара урăхларах ӳкерчĕк сăнама пулать. Статистика кăтартăвĕсем те кăштах лăплантараççĕ темелле. Эпир "пăтравлă" тата ытти эпитет çыпăçтарса пĕтернĕ 1990 çулта, калăпăр, 21116 ача çуралнă. Хам та шăп çав çул аслă хĕрĕме кун çути кăтартнă та, халĕ, шуралма пуçланă пуçăмпа, тĕлĕнетĕп – мĕнле хăраман? Çамрăк, айван пулнă çав, нимрен те шикленмен, хамăра шаннă. Тепĕр çулах хĕрарăмсем ăсланнă курăнать – 12363 пепкене кăна кун çути кăтартнă. Ытла та йывăр килчĕç çав 90-мĕшсем... Шăп çав тапхăрта çемье çавăрса ачисене çĕкленĕ арçынсем халĕ пĕрин хыççăн тепри ăсанаççĕ ĕмĕрлĕх шăп çĕре. Хĕрарăм чăтать теççĕ. Ахăрсамана арçынсен чунне ытла та лăскарĕ курăнать. 1990 çулта 13545 çын вилнĕ, 2000-мĕшĕнче – 18640. Çавăнтанпах çĕнĕрен те çĕнĕ кĕлеткe йышăнаççĕ чăваш масарĕсем – кашни çул 16-17 пиншер... Телее, çамрăксем хăюланчĕç. Патшалăх курăмлă пулăшу пама пуçлани те сисĕнет-тĕр – 2012 çултанпа Чăваш Енре ача сасси ытларах та ытларах илтĕнме пуçларĕ. Тинех çуралакансен йышĕ вилекеннисенчен ирттерчĕ. Тăваттă е ытларах пепкине кун çути кăтартакан та пур халĕ чăваш хĕрарăмĕсен хушшинче. Малашне те çаплах пытăрччĕ пурнăç йĕрки. Пĕр йывăç кассан çичĕ лартма каланă чăваш. Хăмăр хыççăн йĕр хăварас тесен, йăха тăсас тесен кил-çурта ылтăн-кĕмĕлпе кăна мар, ача-пăча хаваслă сассипе те тултарасчĕ... Пумилккене мар, туя, унтан ача ури тытма йыхравлатăр ял-йыш...**




АНАТАЛЛА-ТĂВАЛЛА

# Вăрманта, çăтмахра...

/Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш стр./.

Шел те, кил хуçине Геннадий Павловича вăрмантан таврăнасса кĕтсе илеймерĕмĕр. Ара, кăвак çулăм паян та çитеймен-ха Апрушнайне. «Тăван еншĕн, унăн малашлăхĕшĕн чунне пама хатĕр вăл. Поселок историйĕпе аталанăвĕ пирки ял старостинчен тĕплĕнрех пĕлекен çын çук та пулĕ. Пĕчĕк клуба та сӳнме памасть», – терĕç ун пирки Нăрваш Шăхаль ял тăрăхĕнче.

Вырăх-чĕрлĕх ĕрчетсе, пахчаçимĕç ӳстерсе пурăнаççĕ Апрушнайсем. Кашни килтех вĕлле хурчĕ тытаççĕ. Çĕрпе пĕлсе усă кураççĕ, ăна пушă вырттармаççĕ кунта тĕпленнисем. Сад-пахчинче темĕн тĕрлĕ груша-панулми, чие-слива, иçĕм çырли ӳсет. Пахчаçимĕçне сутмалăх та туса илеççĕ. Кашнин килĕ умĕнчех – чăхчĕп, хур-кăвакал. Шăнкăртам тутарĕсене те илĕртет çак уçланкă. Вĕсем те поселока килсе çурт туяннă. Çамрăксем те ашшĕ-амăшĕн çуртне сутма тăрăшмаççĕ, çуллахи вăхăтра дача вырăнне усă кураççĕ.

### Çулне кура мар

87 çулти Зина аппа Федоровсене хирĕçех пурăнать. Пĕчĕн кинеми пахчинче çум çумланă хыççăн сулхăна канма ларнăччĕ. Эпир маларах кĕртсе панă хаçат-журнала вуласа тухма та ĕлкĕрнĕ вăл. Çывăхрине те, аякрине те лайăх куракансĕр куçлăх та тăхăнса курман ватă. Çĕрулмипе сухан-ыхра йăранĕсем тап-таса. Пӳртĕнче пĕр-пĕр çамрăкăннинчен те типтерлĕ, кашни япали хăй вырăнĕнче. Кӳршисем пăхса тăраççĕ ăна, лавккаран апат-çимĕç кӳрсе параççĕ. Зина аппа ку тăрăха Карапай Шăмăршăран качча килнĕ. Мăшăрĕсĕр юлнă вицĕ ачаллă арçынна тиркемен хĕр. Пĕчĕкскерсене питĕ хĕрхеннĕ, кашнине юратса çитĕнтерсе ура çине тăратнă. Аякри çула пăхмасăр Зина аппа патне килсех çӳреççĕ тĕпренчĕкĕсем. Амăшне хулана илсе каясси пирки сăмах хускатсан яхăнне те ямасть ватă. Кил вучахне сӳнтересшĕн мар кинеми, хăй ĕмĕрне çакăнтах пурăнса ирттересшĕн.

### Аптраман таврашсем

Иртнĕ ĕмĕр пуçламăшĕнче ку таврари çынсем кирпĕч çапнине, тикĕт, кăмрăк хатĕрленине маларах та асăнтăм-ха. Паянхи кун та пурнăçа саплаштарса пымалли мелсене алăран вĕçертмеççĕ вĕсем. Çавăнпа тулăх пурăнаççĕ те Апрушнайсем. Ĕмĕр вăрман хуçалăхĕнче, колхозра ĕçлесе тивĕçлĕ канăва тухнă Дмитрий Николаевичпа Елена Фоминична Хмелевсем сад-пахча ĕçне кăмăллаççĕ. Алексей Шалтынов сурăхсем ĕрчетет. Петр Тукмаков кашни çулах паха пыл нумай туса илет. Çĕрпӳ тăрăхĕнчен качча килнĕ Анна Софронова Апрушнайсене хăйĕн харсăрлăхĕпе тĕлĕнтерет. Анна Ивановна ку тăрăха качча килсенех мăшăрне кăçатă ĕçне явăçтарнă. Халь вĕсем çак таварпа таврари мĕнпур яла тивĕçтереççĕ. Унсăр пуçне Анна чăваш кĕписем çĕлет. Тĕрĕллĕ пир кĕпесене Мускавсем те саккас параççĕ. Ĕлкĕреймен чухне çĕрĕпе куç хупмасăр çĕлет. Вăрлăх сухан туса илессипе те вĕсене çитекенни çук пулĕ ку тăрăхра.

Геннадий Александровичпа Зоя Ивановна Шалтыновсем пĕрле пурăнма тытăннăранпа 55 çул çитнĕ. Тăвата ывăлпа пĕр хĕр çитĕнтернĕ вĕсем. Иккĕшĕ те ятлă-сумлă, хисеплĕ çынсем. Зоя Ивановна çур ĕмĕр ытла ял халăхĕн сывлăхĕшĕн тăрăшнă. «Начар пурăнман эпир. Мăшăр тирпейлĕ ман, ĕçсе-туртса тарăхтарман, аллинчен нихăçан ĕç кайман. Ĕмĕр мĕнле иртнине те сисмерĕм. Вăл пулăшмасан, ăнланмасан 66 çулччен медсестрара ĕçлеес те çукчĕ», – каласа кăтартать кил хуçи арăмĕ. Ыран 77 çул тултаракан Геннадий Александрович та тĕрлĕ çĕрте ĕçлесе писĕхнĕ. Вăрман каснă, бригадирта, сутуçăра тăрăшнă. Çулĕсем пур пулин те килти хуçалăхра йышлă вырăх тытаççĕ, вĕлле хурчĕ ĕрчетеççĕ. Хур чĕппийĕсем кил умĕнче симĕс курăк чĕлĕтетчĕç. Аякра мар качака кĕтĕвĕ çӳретчĕ, вăл та вĕсенех.

### Авкаланса юхать Хырла

Чăвашсем ĕлĕкрен шыв хĕррине вырнаçма тăрăшнă. Ку пысăк уçланкăра та поселок юханшыв çумнерех, пĕр кĕтесе хĕсĕнсе ларнă. Шăп Хырла айккине. Ун чухне вăл питĕ таса пулнă, шывĕ вара витĕр курăнса тăнă теççĕ. Çак тăрăхран пуçланать вăл юхма. Патăрьел тата Шăмăршă районĕсем тăрăх авкаланса малалла каять. Унăн пĕтĕмĕшле тăршшĕ – 91,5 çухрăм. Юханшыв Сĕве гидрологи районне кĕрет. Хырлан сылтăмри пысăк юпписем – Аслă Хырла тата Кĕçĕн Хырла. Палтиел ялĕ çывăхĕнче, юханшывăн икĕ турачĕ пĕрлешнĕ вырăнта, республикăн кăнтăр районĕсене пахалăхлă ĕçмелли шывпа тивĕçтерме управ вырăнĕ тăваççĕ. 2010 çул питĕ шăрăх пулнăран Хырлара шыв типсех ларнă-мĕн. Ялти ĕнесем çав çул чутах типсе вилмен. Ялти пĕр пусă çеç сыхласа хăварнă мăйракаллă шултра вырăха. Кĕтӳрен типсе таврăннăскерсене каçсерен валашкасенчен шыв ĕçтернĕ. Хырлана кайран тепĕр хут чавтарнă. «Хур-кăвакал ӳстерме лайăх халь», – теççĕ ял çыннисем. Юлашки вăхăтра шыв палăрмаллах чакнăран Апрушнайсен кашни килтех иквиç пусă. Пĕри типсен тепринчен шыв ăсаççĕ.

### Хăйсен вăйĕпе – часавай

Ку уçланка Нăрваш Шăхаль ялĕнчен çурла уйăхĕн пуçламăшĕнче, шăп çĕнĕ çĕрулми çитĕнсен, куçса ларнă теççĕ. Çавăнпа та Илия пророка асăнса хăпартнă часавая ятарласа çурлан 2-мĕшĕнче, Илия кунĕнче уçасшăн. Çак ялта çуралса ӳснĕ Петр Николаев, Олег Хмелев, Владимир Симуков, Петр Симуков спонсорсем тăрăшнипе çĕкленĕ çурта.

– Эпир тĕлĕнмелле туслă пулни çакăнтан та курăнать. Пĕр урамлă пĕчĕк поселок тепĕр пысăк ялтан уйрăлса тăрать. Çулталăк хушшинче хăпартса лартрĕç часавая. Инженер-строителе вĕреннĕ Олег Хмелев проекчĕпе çĕкленчĕ вăл. Алли ылтăн унăн. Никама та патне пыртармасăр пăти таранах пĕччен çапрĕ. Сывлăхĕ пултăр ĕнтĕ. Малашне эпир те тĕн уявĕсенче таçта аякка утмăпăр», – хĕпĕртесе калаçаççĕ ялти хĕрарăмсем.

Пурнăç кĕрлесе кăна тăрать Апрушнайра. Кам çырлара, кам вăрманта вутă-шанкă хатĕрлет паян. Хĕл валли вăрман утти çулаççĕ. Урам тулли – чăх-чĕп, хур-кăвакал, кăркка таврашĕ. Кашни килтех хура çырларан калама çук тутлă хуран кукли пĕçереççĕ. Ял çыннисене тата телейлĕрех пулма çутçанталăк газĕ çеç çитмест поселока. Чи пысăк та çутă ĕмĕчĕ çитес вăхăтра пурнăçлансан тем пекехчĕ те.

Елена АТАМАНОВА.
Патăрьел районĕ.
Автор сăнӳкерчĕкĕсем.





АЧАЛĂХ

## Ĕнел тавралăхĕн илемĕ

**Ытармалла мар илемлĕ-çке çу кунĕсем! Уй-хире тухсан салтак тӳмипе утмăлтурат, шур тăрăллă хыт курăкпа чавка пуç тата ытти чăпар чечексем çинчен куçа илме çук. Шел те, хĕлĕпех кĕтнĕ ăшă çулла сисĕнмесĕрех иртсе каять. Çавăнпа та сар хĕвеллĕ те çутă кунсенче килте тунсăхласа ларни килĕшӳллĕ-и? Елчĕк районĕнчи Ĕнел ялĕнче пурăнакан ачасем çак хитрелĕхе хăйсен ӳкерчĕкĕсенче сыхласа хăварма тĕв тытнă.**

Нумай пулмасть ялти культура çуртĕнче «Çуллахи чечексем» ятпа конкурс иртнĕ. Каникул вăхăтĕнче айккинелле илсе хунă хутпа кисткĕне, тĕслĕ кăранташсене туртса кăларса тăван уйхире тухнă ачасем. Ĕнел тавралăхне, çут тĕнче пуянлăхĕпе унăн ырăлăхне сăнланă шăпăрлансем хăйсен ĕçĕсенче. Аякра аслатиллĕ çумăр çăвать, кăвак тӳпере çичĕ тĕспе асамат кĕперĕ ялкăшать е сывлăм ӳкнĕ улăх-çаран, куçа йăмăхтаракан пин-пин тĕслĕ чечек... Ĕшнери саркайăк, турат çинчи чăпар куккук, ешĕл курăк хушшинче сиккелекен симĕс шăрчăк – акă вăл чăн-чăн çу илемĕ. Çутçанталăк хитрелĕхне мĕнле пур çапла сăнлама пĕлекен ачасен пуян ĕçĕсене жюри членĕсене хак пама çăмăлах пулман. Çапах та çĕнтерӳçĕсене палăртса Хисеп хучĕсемпе хавхалантарнă.



Елена БАШКИРОВА.

## «Кĕтрет уйĕнчи» куракасем

**Çынсем авалтан тĕрлĕ курăкпа сипленсе пурăннă. Чир-чĕртен эмелпе мар, симĕс аптека вăйĕпе сывалнă. Ӳсен-тăранран маç, çу, шĕвек хатĕрленĕ. Хĕлле валли çыххи-çыххипе типĕтсе хума та манман. Халăх мелĕпе усă куракан халĕ те нумай.**

Çĕртмен чи юлашки кунĕнче Етĕрнери сывлăха çирĕплетекен «Непоседы» çуллахи лагерьти ачасем çутçанталăкăн тĕлĕнтермĕш тĕнчипе паллашма çулçӳреве тухнă. Вĕсем валли улăх-çаранра ятарласа «Çутçанталăк аптеки» ятпа Якубович ертсе пыракан кăларăмран нимĕнпе те кая мар «Кĕтрет уйĕ» вăйă йĕркеленĕ. Ачасем черетпе эмел курăкĕсемпе çыхăннă тупмалли юмахсен тупсăмĕсене шыранă, тĕрлĕ ӳсен-тăранпа, вĕсем çинчен хывнă сăвă-юрăпа паллашнă. Хĕрлĕ пилеш, сырлан, палан, ниш курăкĕн сиплĕхĕ çинчен каласа кăтартнă вĕрентекенсем. Çакă шăпăрлансене похода е экскурсие кайсан, çулçӳреве тухсан та кирлĕ пулĕ. Сăмахран, çул курăкне кăна илĕпĕр. Вăл та тĕлĕнмелле сиплĕ, суран çумне тытатăн та – наччасрах юна чарать.

Пирĕн çĕр тулăх та пуян. Уй-хирте, вăрманта, шурлăхсенче пин-пин тĕрлĕ курăк ӳсет. Вĕсенчен чылайăшĕ усăллă, пĕринчен теприне уйăрса илме кăна пĕлмелле. Эмел курăкĕ сывлăха сиен те кӳме пултарать. Çавăнпа та сиплев пуçличчен аслисен тухтăрпа канашламалли, ачасен ашшĕ-амăшĕ хушмасăр çăвара эмел хыпма юраманни пирки те асăрхаттарнă «Кĕтрет уйĕнче».

Елена ГЛУХОВА.



ҪАПЛА ТА ПУЛАТЬ

# Чăваш кинĕ

**Кишĕр темшĕн начар шăтрĕ кăҫал. Телевизорпа ахаль кăтартмарĕҫ пулĕ: виҫĕ хутаҫран пĕрне улталаса сутаҫҫĕ-мĕн. Йăрана пушă хăварма ҫук, ҫавăнпа ирех Кӳкеҫ пасарне ҫул тытрăм. Суту-илӳ аван пырать кунта, пурте ăшă ҫанталăкпа усă курса пахчаҫимĕҫ вăхăтра лартса хăварасшăн. Кам хăяр, кам помидор туянать. Купăста калчи патне те черет тăнă. Кӳкеҫ – Ишлей мар: кунта чăвашла калаҫни ытларах илтĕнет. Яштака пĕр хĕрарăм вара, майралла тăхăннăскер, вырăсла кăна перкелешет тавар илекенсемпе. Тем туртрĕ ун патне, пырса паллашмасăр чăтаймарăм. Сăмах хыҫҫăн сăмах... Хăй Кӳкеҫе епле лекни пирки хайхискер пĕр пытармасăр каласа кăтартрĕ.**

Анна Ивановна ятлă-мĕн. Хусанта 8 класс пĕтерсен ашшĕ-амăшĕпе пĕрле Туркестана ĕҫлеме тухса кайнă. Совет Союзĕнче кун пек тĕслĕх самай пулнă. Хама та Шупашкарти строительство техникумĕнчен вĕренсе тухсан Казахстана ĕҫлеме янăччĕ. Аня Ашхабадра медсестрана вĕренсе тухать. Шăпа ăна сăпайлă каччăпа паллаштарать. Йĕкĕт Кӳкеҫри вăтам шкулта вĕреннĕ, каярахпа ҫар пурнăҫне суйласа илнĕ. Офицера Туркестан тĕп хулине ҫар тивĕҫне пурнăҫлама янă. Шăпах унта тĕл пулаҫҫĕ те ҫамрăксем. Туй туса пĕрлешеҫҫĕ, виҫĕ ывăла кун ҫути кăтартаҫҫĕ.

Анна Ивановнăн упăшки ҫар службин картлашкипе ăнăҫлă хăпарать. Ăна полк ертсе пыма шанаҫҫĕ, полковник звание тивĕҫет вăл. Анчах кĕтмен ҫĕртен самана улшăнать – Совет Союзĕ саланса каять. Чун та киле туртать. Радиопа телекурав та вырăсла калаҫакан ҫынсене Раççее таврăнма чĕнсе калама пуҫлаҫҫĕ. Ҫемье кĕҫĕн ывăлĕпе пĕрле 2002 ҫулта Кӳкеҫе таврăнма тĕв тăвать. Вăт ҫакăнтан пуҫланаҫҫĕ те йывăрлăхсем. Туркмен чиновникĕсем вĕсене Раççей чикки урлă каҫма документсем памаҫҫĕ. Тĕрлĕ пӳлĕм алăкне ҫулталăк шакканă хыҫҫăн кăна аран алла справка та пулин илеҫҫĕ. Пурҫук япалисене йӳнĕ хакпа сутса ярса икĕ чăматанпа тухаҫҫĕ ҫула. Анчах та чи пысăк йывăрлăхсем чикĕ леш енче мар, тăван ҫĕрте кĕтсе тăнă-мĕн...

Алăра – Туркмен паспорчĕсем. Шупашкарта миграци службинче вĕсене Раççей паспортне памаҫҫĕ. Документсăр вара никам та ĕҫе илмест. Пуслăхсен алăкĕсене шаккаса




сӳрессе каллех ҫулталăк иртет. Кăлăхах. Юрать-ха упăшкин амăшĕ пенси илет. Ҫав укҫапа пурнăҫа майлаштарса пыраҫҫĕ.

Пĕррехинче пирĕн чăваш кинĕ телевизорпа чăрсăр политик "Россия для русских" тенине илтет те ҫав каҫах ун патне электрон почтипе хăйсен пурнăҫĕ ҫинчен кĕскен ҫырса пĕлтерет. Пĕр-икĕ кунранах пирĕн статья персонажĕсене Раççей гражданинĕ пулнине ҫирĕплетекен паспортсем тыттараҫҫĕ. Тинех! Анчах та хаш! сывлама иртерех-мĕн. Нуша малалла тăсăлать. Ара, Анна Ивановнăпа унăн упăшки Раççейре ҫуралнă, кĕҫĕн ывăлĕ вара – Туркменистанра. Апла пулсан вăл – вĕсен гражданĕ...

Каччă та Раççей ҫынни пуласшăн. Каллех – пуслăх пӳлĕмĕсем... Ҫар комиссариатĕнче хăйне салтака илсе кайма йăлăнать. Завод директорĕсене "ĕҫе илĕр-ха" тет. Каллех – кăлăхах. Юрать-ха, Мускав тăрăхĕнче стройкăра пилĕк авма документсем ыйтсах каймаҫҫĕ. Ҫапла... 10 ҫул иртет. Малтан вактĕвек ĕҫре вăй хурать, каярахпа каменщик, монолитчик профессийĕне алла илет. Ĕҫ ватăлтармасть, шухăш ватăлтарать теҫҫĕ. Нумай куляннă пирки – ара, паспортсăр ҫемье ҫавăрма та ҫук вĕт – каччă ват мучи пек шуралса ларать.

Икĕ ҫул каялла кăна миграции службине пирĕн каччăна хыснана 60 пин тенкĕ тӳленĕ хыҫҫăн вырăс чĕлхипе экзамен тытма ирĕк парать. Тĕрĕслеве ăнăҫлă чăтать яш. Ҫапла алла Раççей паспортне илет. Тинех лăш! сывласа яма пултаратăн, вулаканăм. Ҫав ҫулах вăл авланать. Халĕ арăмĕпе ывăл ӳстереҫҫĕ.

Анна Ивановна Ашхабад ҫыннисен тараватлăхне тăтăш аса илет. Унти халăх пĕрпĕрне хисепленине, курмассерен сывлăх суннине паларать. Пасарта-мĕнте сутуҫăсем кашни туянакапа кăмăллă калаҫнине, пурнăҫ еплерех шуса пынипе кăсăкланнине пĕлтерет. Хĕрсемпе хĕрарăмсене "джань" тесе чĕнеҫҫĕ. Чăвашла куҫарсан "чиперкеҫĕм" тени пулать ĕнтĕ.

Чăваш Ене килсен автобус чарăнăвĕнче ҫынсемпе калаҫу пуҫлама тăрсан хăй ҫине сивĕ куҫпа пăхнине халĕ те манса каяймасть хĕрарăм. Упăшкин, халĕ ĕнтĕ хăйĕн те, ентешĕсене ҫынпа кăмăллăрах пулма хистет. Эсĕ хирĕҫ пулакана йăл кулă парнелесен, вăл вара – теприне, пурнăҫ та савăкрах та, ҫутăрах та пуласса шанать чăваш кинĕ.

**Николай ПЛАТОНОВ.**
Шупашкар районĕ.

АСАИЛӲ

# Манăҫмаççĕ шкул ҫулĕсем...



Элĕк районĕнчи Юманлăхри сакăр ҫул вĕренмелли шкулта пĕлӳ пухнă тантăшăмсем куҫ умĕнчен каймаҫҫĕ. Вăрçă хыҫҫăн умри пуласлăха ҫутатассишĕн тăрăшса вĕренекенсем, класа ертсе пыракан Екатерина Семенова /Ильина/ яланах асра. Паянхи кун вăл хăйĕн ҫемйипе Юманлăхра пурăнать. Пĕрремĕш класа эпир Куракăшри пуҫламăш шкула кайнă. Ҫăпата сырса ҫурăм урлă пир сумка ҫакнă та – кирек мĕнле ҫанталăкра та ҫула тухнă. Харсăр пулнă вăл вăхăтри ҫамрăксем. Пĕрремĕш вĕрентекенĕмĕр Иустиния Кузнецова тĕлĕнмелле ăшă кăмăллăччĕ. Ăс-хакăл панисĕр пуҫне пире пурнăҫа юратма вĕрентетчĕ. Пирĕн класра 4 хĕрача, 15 арҫын ачаччĕ. 4-мĕш класс хыҫҫăн кашни кунах Юманлăхри сакăр ҫул вĕренмелли шкула ҫупма пуҫларăмăр. Вăл чиркӳ ҫуртĕнче вырнаҫнăччĕ. Кунта ҫĕнĕ ачасемпе туслашма тӳр килчĕ. Учительсен ăшă та ырă туйăмĕ халĕ те чунра упранать. Шкул директорĕнче тăрăшнă Михаил Корнилов пире пуласлăх ҫулне усма пулăшнă. Вырăс чĕлхипе, грамматикăпа Анна Корнилова вĕрентетчĕ. Чăваш чĕлхипе тата музыкăпа – Николай Абашников. Унăн мăшăрĕ Мария Викторовна алгебра ертсе пыратчĕ. Чăваш чĕлхине чунтан вĕрентнĕ Клавдия Степанова та асран тухмасть. Физкультура учителĕ Фридрих Степанов пире спортпа туслаштарчĕ. Арҫын ачасене, хĕрачасене те столяр ĕҫне вĕрентекен, ҫав вăхăтрах физика учителĕнче тăрăшакан Николай Кузнецова та ырăпа асăнас килет. Халĕ вĕсенчен чылайăшĕ ҫук, анчах та юратнă учительсен ăшпиллĕхĕ, ăслă сăмахĕсем яланах асра.

Шкул хыҫҫăн хамăн кунҫулăма пичет ĕҫĕпе ҫыхăнтартăм. Эпир, вăрçă хыҫҫăнхи ачасем, хамăр ума лартнă тĕллеве пурте пурнăҫланă, ҫĕршыва юрăхлă пулнă. Пĕрле вĕреннисемпе ăшă ҫу кунĕсенче тĕл пулу йĕркелесен тем пекехчĕ те.

**Роза КАЛМЫКОВА.**
Элĕк районĕ.

ПУКАШ ПУТИШĔ

# Кĕпер айĕнче

Хурăньял тĕлĕнче паян та ҫакăнса тăрать-ха ҫав кĕпер. Историе упрать тейĕн. Хăмисем ҫĕрĕшнипе ун ҫине никам та ура ярса пусмасть. Лисаппа Тули вăл кĕперпе усă курма хăйне май меслет шухăшласа тупнăччĕ. Энĕшре пăр ларсан кĕпер айĕпе ҫуна ҫулĕ выртатчĕ пасара, больницăна, района, ытти ҫĕре ҫӳреме.

Пĕрре такам ҫуни ҫинчен пысăк шăмă ӳксе юлнине, ăна тилĕ ҫĕклесе тарнине курать Туля. Ҫавăн тĕслĕхĕпе унăн пуҫĕнче сунарăн ҫĕнĕ меслечĕ ҫуралать.

Хăваран ҫыхнă кăрмана кĕпер айне ҫакать, ăна ячĕшĕн, кайран туртса илме пултăр тесе, кантрапа ҫыхать.

Аялта мĕн пулмалла? Паллах, выҫса ҫитнисем валли апат. Вилнĕ ула кураксене, чанасене пĕчĕк юпа ҫумне кăкарать. Илĕртмĕш пулчĕ те!..

Чăх вăрлама вĕреннĕ вăрăм хӳреллине ҫавă ҫеҫ кирлĕ.

Пырать йăпшăнса выҫăхнăскер. Туля ҫыран хĕрринчех ларать. Вăл пушă ҫырл хушăкĕнчен сăнать. Кантран пĕр вĕҫĕ ун патнех ҫитет.

Шап! тăрăнса анать тилĕ ҫине кăрман. Леш чеешкин ҫав самантра те «чăх-курака» пăвмалла, те тухса тарма вырăншăтăк шырамалла? Спортсмен Туля хытарнă сукмакпа чупса та ҫитет.

Пĕррехинче ҫапла тилĕ килессе кĕтсе ларатпăр. Хайхи Хуракасси оперĕ, Иван Иванч текенни, ӳсĕрскер юрласа хăпарать. Ялан ҫаплаччĕ вăл. Кĕпер айне январĕ чупса ҫитсен тахăшĕ капкăн кантрине туртнă. Пирĕн ушкăнра асли Хурăньял урамне кайса ҫухалнă самантра пулчĕ ҫакă. Пире хăварса час-часах ăшăнма каятчĕ ҫав: пĕрле вĕреннĕ Лассан Суйккисем, Палюк Ҫерушши, Малинин Ваççисем патне. Ялĕпех тус-тăванччĕ те унăн... Хайхи опера лăпах хупласа хурать ҫӳлтен ӳкнĕ кăрман. Хăранă ăйăр Киремет урамĕпе сиккипех вĕҫтерет. Конюхсем курса чупса ҫитеҫҫĕ, шăнса вилесрен хăраса ҫурта кĕртсе пăрахаҫҫĕ. Кĕпер ҫинче ҫăлнăшăн тав тăвать лешĕ тепĕр кунне. Четвĕрт кĕленчи пуҫлать.

Сăмакун шыраса салтак маткисене питĕ тустарнă Иван Иванч. Ҫавăншăн тавăрасшăн пулнă та ăна.

Лисаппа Тули тытнă тилĕ тирĕсенчен Аврам кум, Нестĕр Улушши чаплă мулаххайсем ҫĕленĕ. Хăшĕсен паян та упранаççĕ тет.

**Анатолий АНИШОВ.**
Сĕнтĕрвăрри районĕ.



АПАЧĔ ТУТЛĂ ПУЛТĂР

### Какайпа хăяр салачĕ



**400 грамм чăх какайĕ, 3 çăмарта, 2 хăяр, 1 панулми, 150 грамм сыр, майонез, тăвар, укроп кирлĕ.**

Чăх какайне, çăмартана пĕçермелле. Чăх какайне вĕттĕн турамалла. Çăмартана, хăяра, панулмие, сыра теркăламалла. Çимĕçсене майонезпа пăтратмалла. Салата вĕтетнĕ укроппа илемлетмелле.

### Кăлпассипе, шалча пăрçипе

**Тĕтĕмленĕ 100 грамм кăлпасси, пĕçернĕ 1 кишĕр, маринадланă 100 грамм хăяр, 100 грамм шалча пăрçи, 100 грамм хура çăкăр, салат çулçи, петрушка, майонез, тăвар кирлĕ.**

Кишĕре – тăваткалласа, кăлпассипе хăяра çурма çаврашкан турамалла. Салат çулçине алăпа татмалла, петрушкăна вĕттĕн касмалла.

Тăваткаллаcа туранă çăкăра тип çупа ăшаламалла.

Çимĕçсене майонезпа пăтратмалла, тăвар хушмалла.

### Панулми квасĕ

**1 килограмм панулми, 100 грамм сахăр, 200 грамм пыл, 30 грамм çĕпре, 1 чей кашăкĕ корица, 4 литр шыв кирлĕ.**

Туранă панулмие шыва ярса вĕретмелле. Сивĕнсен сăрхăнтармалла. Çимĕçсене хушса 3 кун йӳçĕтмелле. Панулми квасне сивĕтмĕшре упрамалла.

### Смузи

**1 банан, 300 грамм хура çырла, 100 грамм мороженăй, 2 апат кашăкĕ сахăр, 500 миллилитр сĕт кирлĕ.**

Банана çаврашкан турамалла. Çимĕçсене блендерпа пăтратмалла. Хатĕр напитока бакала ямалла.

### Манник

**Чуста çăрма 1-ер стакан манна кĕрпи, турăх, сахăр, 3 çăмарта, 4 апат кашăкĕ çăнăх, 1 чей кашăкĕ апат соди кирлĕ.**

**Крем валли 0,5 стакан хăйма, 0,5 стакан сахăр çăнăхĕ, какао хатĕрлемелле.**

Çăмартана турăхпа пăтратса кăпăклантармалла, манна кĕрпи ямалла. 40 минутран сахăр, çăнăх, апат соди хушмалла. Чустана çатмана ямалла. Маннике духовкăра 40 минут пĕçермелле. Çулăма сӳнтерсен сахăр çăнăхĕпе пăтратса кăпăклантарнă хăйма сĕрмелле, какао сапмалла.

### Çырлапа печени торчĕ

**500 грамм сĕлĕ печенийĕ, 500 грамм хăйма, 1 стакан сахăр, 200 грамм çырла, 100 грамм шăккалат кирлĕ.**

Хăймана сахăрпа пăтратса кăпăклантармалла.

Хăйма кремне чиксе кăларнă печение купаласа хăпартмалла. Кашни сийе çырла хумалла. Çиеле хăйма кремĕ сĕрмелле, теркăланă шăккалат сапмалла, çырла хумалла. Çырла тортне 12 сехетлĕхе сивĕтмĕше лартмалла.

### Чие мусĕ

**1 стакан чие, 1 стакан сахăр, 3 апат кашăкĕ манна кĕрпи кирлĕ.**

Вăрринчен тасатнă чие çырлине 80 миллилитр вĕретнĕ шывпа пăтратмалла. Сĕткенне сăрхăнтарса сивĕтмĕше лартмалла.

Сĕткенне юхтарса илнĕ çырлана 3 стакан шывпа хутăштармалла, 5 минут вĕретмелле. Çырлана сăрхăнтарсан шыва тепĕр хут çулăм çине лартмалла, манна кĕрпи хушмалла. Пăтта вăйсăр çулăм çинче 20 минут пĕçермелле, сахăр ямалла.

Сĕткен хушсан муса миксерпа пăтратмалла. Ăна креманкăна тултарса сивĕтмĕше лартмалла.

### Çĕрулми хăпартăвĕ

**8 çĕрулми, 500 грамм шăмăсăр пулă, 2 помидор, пусăл 1 сухан, 100 грамм сыр, укроп, 200 миллилитр шĕвĕ хăйма, тăвар, пăрăç, тип çу кирлĕ.**

Çĕрулмие, сухана, помидора çаврашкан турамалла.

Пулла пĕчĕкшерĕн касмалла, вĕтетнĕ укроп хушмалла.

Шĕвĕ хăймана тăварпа, пăрăçпа пăтратмалла.

Çатмана тип çу сĕрмелле, çимĕçсене сийлесе /çĕрулми – пулă – сухан – çĕрулми – помидор – теркăланă сыр/ хăпартмалла. Çиелтен шĕвĕ хăйма ямалла. Хăпартăва фольгапа витсе пĕçермелле. 30 минутран фольгана илмелле, хăпартăва ылтăн тĕс çапиччен çулăма сӳнтермелле мар.

СЫВЛĂХ

# Ĕмĕре тăсас тесен



**Ыхрара кали, кальци, натри, селен, магни, кремнипе фосфор йӳçекĕсем, С, D, В витаминсем, эфир çăвĕсем пур. Вăл шăк хăвалать, юн пусăмне пĕчĕклетет, шĕвĕрĕлчене пĕтерет, микробсене вĕлерет, сурана ӳт илме пулăшать, юна шĕвететь, холестерин виçине чакарать. Унсăр пуçне организма тасатать, иммун тытăмне çирĕплетет, чĕре ĕçне йĕркелет.**

**Сунас ерсен** вĕтетнĕ ыхрана хупăлчаллă пĕчĕк савăта ямалла. Кунĕпе темиçе хут хупăлчана уçса ыхра шăршипе сывламалла.

**Иммун тытăмне çирĕплетме** 350 грамм ыхрана вĕтетмелле, 20 лимон сĕткенне пăчăртаса кăлармалла. Лимон сĕткенĕпе ыхра хутăшне пĕр сехет лартмалла. 1 чей кашăкĕ хутăша çур стакан шыва ярса пăтратмалла, сывăрма выртиччен ĕçмелле.

**Пыр шыççан** вĕтетнĕ 1 шăл ыхрана вĕрется сивĕтнĕ 1 стакан шыва ямалла, 1 сехет лартмалла. Пыра кунĕпе темиçе хутчен ыхра шывĕпе чӳхемелле.

**Юн тымарĕсене çирĕплетме** 1 килограмм пыл, 10 лимон, 5 пуç ыхра кирлĕ. Лимон сĕткенне пăчăртаса кăлармалла, ыхрана вĕтетмелле. Пыла лимон сĕткенĕпе, ыхрапа пăтратмалла. Ăна тĕттĕм вырăнта 7 кун тытмалла, 4 чей кашăкĕ хутăша шывпа сыпса куллен 1 хут ĕçмелле.

**Ӳпке шыççан** 1 чей кашăкĕ ыхра сĕткенне 1 стакан ăшă сĕтпе пăтратмалла. Куллен 2-3 хут ĕçмелле.



ВЫЛЬĂХ-ЧĔРЛĔХ

# Пулăра – мышьяк, апатра – ГМО



Россельхознадзорăн республикăри управленийĕн специалисчĕсем Шупашкар районĕнчи пĕр хуçалăхри мăйракаллă шултра выльăх микоплазмозпа чирленине тупса палăртнă. Анчах ку чире чару мероприятийĕсем /карантин/ йĕркелемелли çинчен калакан перечене кĕртмен. Çавăнпа та унпа хуçалăхра карантин йĕркисене çирĕплетмесĕрех кĕрешмелле.

Мăйракаллă шултра выльăхăн микоплазмозĕ – тĕнчипе пуринчен ытла паллă инфекци чирĕ. Ку мура пула выльăхăн мастит, эндометрит, вульвовагинит, сальпингит аталанать, хĕсĕрлĕх пулать е хырăм ӳкет, пăру хавшак е вилĕ çуралать. Чирлĕ вăкăрсем – орхитпа, эпидидимитпа, тынасем кератоконъюктивитпа, ринитпа, пневмонипе, артритпа аптăраççĕ. Асăннă амак ерсен выльăх çиме пăрахать, сывлав çулĕсенчен пӳрлĕ лăймака тухать, тĕртĕмсем шыçăнаççĕ.

Микоплазмоз выльăх ĕрчетекен хуçалăхсене пысăк тăкак кӳнĕрен паянхи кун çакă çивĕч ыйту шутланать. Çавăнпа та профилактика мероприятийĕсем вăхăтра ирттерни пĕлтерĕшлĕ, чире пуçламăш тапхăрта палăртса çийĕнчех сиплени тытăнмалла. Витесенче дезинфекци ирттерни те лайăх.

Чирлĕ выльăхран илекен продукци пахалăхĕ те иккĕленӳллĕ. Çавăнпа та выльăх-чĕрлĕх продукцине те лабораторирех тĕпчемелле: хамăр çĕршывра кăларнине те, чикĕ леш енчен килекеннине те.

Пĕлтĕр çапла республикăри хуçалăхсенчи чĕрĕ сĕт пробисенче соматика клеткисем виçерен пысăккине, тетрациклин ушкăнĕнчи антибиотиксем пуррине палăртнă. Соматика клеткисем ытлашши пулни мастит чирĕпе çыхăннă. Тинтерех антибиотиксемпе сипленĕ ĕнен сĕтне тӳрех хутăштарса ямалла маррине, эмел организмран тухса пĕтиччен тăхтамаллине палăртаççĕ специалистсем.

Аш-какайра та сиенлĕ микробсем тупса палăртнă. Çакă вара çыннăн вар-хырăм ĕçне пăсма, наркăмăшлантарма пултарать. Пуснă, тирпейленĕ тата упранă чухне санитари правилисене пăхăнманнипе те çапла пулать.

Кăçал республикăра пулăра /"Севрыбком" ООО/ мышьяк тупнă, кайăк-кĕшĕк субпродукчĕнче – сальмонеллăсем. Тĕрĕсрех, пирĕн регионти пĕр общество кăларнă çимĕçрен Ульяновск облаçĕнче проба илнĕ май сиенлĕ çак бактерие "тăрă шыв çине кăларма" май килнĕ.

Пĕлтĕрхи пекех, кăçал та сĕт пробисенче соматика клеткисем пулнă. Сăлтавне тĕпчеççĕ.

Выльăх апатĕнче ГМО /генетически модифицированный организм/ виçи нормăран пысăккине палăртнă: пăрусем валли Смоленск облаçĕнчен илсе килнĕ куккурусра, соя шротĕнче; сысна çурисен апатĕнче – Германи соя шротĕнче тата куккурусра, çавăн пекех Калининградран çитнĕ соя шротĕнче, кукурусра.

Ахаль культурăсемпе ГМ-культурăсем хирехирĕçле шăркаланни пирки вун-вун çул пухнă информаци тăрăх, куккурусăн пĕтĕмĕшле калăпăшĕн – 50 процентĕнче, сойăн – 50 процентĕнче, рапсăн 80 процентĕнче ГМ-материал упранса юлать-мĕн. Çакă çын сывлăхне мĕнле витĕм кӳме пултарасси пирки уçăмлăх çук. Ахальтен мар Çĕр çинчи çынсен 86 проценчĕ ГМ-апат-çимĕçпе усă курассине тата çиессине хирĕç. Скандинавире, сăмахран, ГМО усă курма пачах чарнă.

Раççейре ку енĕпе тĕпчевсем çук, анчах та чуна пусаракан статистика пур: Раççей çыннисен чирĕсен 30-50 проценчĕ апатланасси пăсăлнипе тата пахалăхсăр продукципе çыхăннă.

**Надежда ВАСИЛЬЕВА, управлени ĕçченĕ.**

ПАХЧАÇĂ КĔТЕСĔ

# Апат соди пулăшать



Вăл купăстана çиекен симĕс хурта пĕтерет. Апат содипе çăнăх /1:1/ хутăшне пахчаçимĕç çине сапмалла. Ку апат хурт-кăпшанкăшăн наркăмăш вырăнĕнчех.

Апат содипе шыв хутăшĕпе сирпĕтсен помидор пылакрах пулать.

Исĕм пиçнĕ вăхăтра та апат содипе усă курмалла. 75 грамм апат содине 10 литр шывра ирĕлтермелле. Çак хутăшпа ӳсен-тăранăн аялти пайне сирпĕтмелле. Вăл çырлана пылаклатать тата çĕресрен сыхлать.

Тислĕк купинчен ырă мар шăршă кĕрет-и? Унта апат соди хушăр. Вăхăт иртнĕçемĕн шăршă сирĕлĕ.

Пахчари е кил картишĕнчи плитка сарнă утмаçул хушшине апат содипе шыв хутăшĕ ямалла – çак вырăнта çум курăкĕ тухмĕ.

Пахчара ĕçленĕ хыççăн алла апат содипе çумалла. Варалансан чăк савăт-сапана та лайăх тасатать вăл.






ÇЫРУ ÇЫРТĂМ ВАСКАСА

Эпĕ çамрăках мар. Мăшăр пурнăçран вăхăтсăр уйрăлса кайнă хыççăн Шупашкарта пĕр арçынпа паллашрăм. Вăл та нумай пулмасть арăмне çухатнă. Икĕ çулне чиперех, пĕр вăрçăнмасăр пурăнтăмăр Володьăпа. Кайран чашăк-тирĕк сăлтавсăрах шăкăртатма пуçларĕ. Чĕлхе вăрăмми, шухăшламасăр калаçни хирĕçӳ патне илсе пынине хам та лайăх ăнланатăп-ха. Пĕр-пĕрне хăнăхса çитетĕн те хыттăн каласа хурасси те пулать тепĕр чухне. Пахчара эпĕ ытларах ĕçленĕн, вăл вара

# Упрама пĕлмесен

канса ларнăн çеç туйăнатчĕ. Киле çитсен кухньăра ăшталанатăп, вăл вара телевизор курать. Мăкăртатмалли кашни кунах тупăнатчĕ. Арçынна киле кĕртмелле мар çав, хĕрарăмăн хăйĕн ун патне каймалла. Пĕр кунхине Володьăн чĕтăмлăхĕ пĕтрĕ, вăл япалисене пуçтарсах пăрахса кайрĕ. «Юл, сансăр пурăнаймастăп», – тесе каламаллаччĕ манăн, кутăнлăха пула пĕр сăмах та чĕнеймерĕм. Пӳрт пушанса юлнă хыççăн выртса йĕтĕм. Каялла таврăнать пуль терĕм, кĕтсе илеймерĕм. Йăнăшрăм. Пĕлетĕп, халь тин ăна таврăймăн. Эпĕ те пĕрремĕш утăм тăваймастăп. Вăл ман çуртран аякра мар ĕçлет, пирĕн умран кашни кунах иртсе çӳрет, анчах та пĕрре те кĕрсе тухмасть, шăнкăравламасть те. Халь пĕччен хĕрарăм нумай, тен, урăххине те тупса яма ĕлкĕрнĕ. Ĕçмен-туртман арçын урамра йăваланса выртмасть. Пуррине упрама пĕлместпĕр çав эпир, кайран макăратпăр. Уйрăлу хуçать çынна. Ун хыççăн тӳрех больницăна лекрĕм. Ачамсен хăйсен пурнăçĕ, хăнана кĕрсе тухаççĕ те хăвăртрах килĕсене васкаççĕ. Чĕлхене чарма пĕлменни, мăнкăмăллăх пĕтерет çынна. Эпĕ шăпах çавнашкаллисенчен пĕри. Хама никама та кӳрентерме памастăп, нихăçан та мĕскĕнленместĕп. Тавлашура та эпĕ çĕнтеретĕп, юлашки сăмах кирек хăçан та ман çăвартан тухать. Арçынсене кăна мар, манпа хутшăнакансене пурне те йывăр. Вăйлă хĕрарăм эпĕ, пенсие тухнă пулин те кун-каçа ик-виç çĕрте ĕçлеме ĕлкĕретĕп. Анчах та пурнăçра пĕччен. Укçа хыççăн хăваланипе, хам çумри арçынна сывламасăр ĕçлеттернипе те çыхăннă пулĕ ку. Хĕрарăмăн пурнăçра пăртак çемçерех, ачашрах пулмаллине ăнланатăп, анчах та ун пирки çийĕнчех манса каятăп. Володя ăшă чунлă арçын, çынна ман пек çапса хуçаканни мар вăл. Халĕччен тӳрккеслĕхне, усаллăхне те асăрхаман. Унашкаллине эпĕ урăх нихăçан та тупаяс çук. Иккĕн-иккĕнех çав, пĕччен апат та анмасть. Пахчари чечексен илемĕ те савăнтармасть. Каçару ыйтсан Володя каялла таврăнĕ-ши? Йăнăшăма тӳрлетме май килĕ-ши?

**Вера ПЕТРОВА.**
Шупашкар хули.

ЧУНРИ

# Юрламасть садра саркайăк

Авланнă арçынпа çыхланма мĕне кирлĕччĕ-ши? Çемйине пăрахса ман пата килĕ терĕм-ши? Эх, хĕр чухне ытла та айван-çке эпир, арăмĕ пуррине систерчĕç-çке малтанах. Ĕненмерĕм, пĕр çынна та итлемерĕм, сивĕтесшĕн, ахаль çеç калаçаççĕ пуль терĕм. Тепĕр тесен, пуçа çухатасла, çунатланса вĕçекенскере авланни мĕне пĕлтеретчĕ-ши? Халĕччен никама савса курманскер чечексем, канфет парнеленине, кашни кун ăшă сăмахсемпе йăпатнине юрату выrăнне йышăнтăм-ши?

...Пахчари сирень шап-шурă çеçкереччĕ ун чухне. Садра саркайăк каçăхса кайсах юрă шăрантаратчĕ. Сана курнăкурманах чĕрем хыттăн тапма пуçлатчĕ. Кашни каçа чăтăмсăррăн кĕтеттĕм. Пĕрремĕш хут хыттăн-хыттăн чуптунине епле манăн? Çӳл тӳпере вĕçеттĕм санпа чухне. Уйăх çине хăпарса анаттăм. Вăхăтлăх телей çинчен шухăшлама та пултараймăн çав. Ытла та хăвăрт килчĕ уйрăлу, хăй хыçĕнчен чĕрене касса татакан ырату çеç хăварчĕ. Гена темĕн пытарнăн туйăнатчĕ манран, ыйтма хăяймастăмччĕ. Çие юлчĕ. Кĕçех амăшĕ пулассине чун савнине савăнса каласа кăтартрăм. Кăмăлĕ тӳрех пăсăлчĕ, сăлтав тупса манпа ытлашши сăмах вакламасăрах кайса çухалчĕ. Урăх килмерĕ те. Вăл çемьеллĕ, икĕ ачаллă пулни уçăмланчĕ. Çакна ытла та кая юлса ăнлантăм.

Юрламасть текех садра саркайăк. Ывăнса çитрĕ-ши? Е эпĕ çеç илтместĕп-ши? Ĕнерхи уяр кун та тăрук таçта çухалчĕ. Сар хĕвеле хура пĕлĕтсем хупларĕç. Пĕччен те хăр тăлăх юлтăм çак çĕр çинче. Чавса çывăх та – çыртаймăн. Юрăри пекех халь, пылак çырлине пĕрле тутантăмăр, йӳççине вара пĕчченех çиме тивет-ши? Мĕнех, йывăр пулсан та чăтăп, шăпа пӳрнинчен иртеймĕн теççĕ. Çапах та никама та итлеместĕп, пысăк юратупа тĕвĕленнĕ ачана çурататăпах. Ял халăхĕ ир те каç кирек мĕн пăшăлтаттăр, хăçан та пулсан ман çинчен манса каяççех. Халь эпĕ вĕсемшĕн сĕтĕрĕнчĕк, юхха хĕрарăм çеç. Пурнăçра кам йăнăш утăм тумасть-ши? Асаннепе пĕр çултисен хушшинче те качча каймасăр ача çуратнисем пайтахчĕ. Халь эпĕ питĕ япăх-и? Çын калаçасран хăраса тата пурин умĕнче те лайăх пулас тесе пепкене вĕлермелле-и-ха? Хĕрĕх чĕрнеллисем те шур кĕпепе венчете тăраççĕ. Мĕнех, пĕрисене качча илеççĕ, манпа вара урăхларах пулса тухрĕ, хам айванни пирки ултав серепине çакланма лекрĕ. Пурнăç çине урăхларах куçпа пăхма тытăннă хыççăн кунта çав тери хăрушшине курмастăп. Арăмĕ пуррине ĕненмерĕм малтан, авланнă арçынпа нихăçан та çыхланас çукчĕ. Мăшăрне те систермĕн, çын çемйине аркатас килмест. Пурăнччăрах. Купăста яшки хăвăрт йăлăхтарать теççĕ, çавăншăн çеç çӳренĕ апла ман пата Гена. Таса хĕре çыпăççиччен пĕр-пĕр инке арăм патне сукмак хываймăн-шим? Арçынла мар, паллах, çие юлнине пĕлсен мулкач пекех айккинелле тапса сикрĕ. Телефон номерне те çийĕнчех улăштарчĕ. Пурнăçран вăхăтсăр уйрăлнă атте пилĕ çитсен эпĕ те телейлĕ пулăп-ха. Паян садра саркайăк юрламаннишĕн кулянса чунăма ыраттарас килмест. Кĕр те çитĕ, хĕллехи çил-тăман хыççăн каллех çутă çуркунне килĕ. Саркайăк пирĕн пахчара çĕнĕрен йăва çавăрĕ. Чи çепĕç юррине, тен, ун чухне ман валли шăрантарĕ.

**ИРИНА.**
Шупашкар районĕ.

АХ, АНЧАХ...

# Интернетри капăр пурнăç

Çӳлти хутри кӳршĕсем лăпкă пурăнма пĕлмеççĕ. Акă каллех тем пайлаççĕ. Хамăр хваттерте кăшкăрашнă пекех йăлт илтĕнет. Хулара никамран та нимĕн те пытараймăн. Хатĕр-хĕтĕр çĕмĕреççĕ, çапăçаççĕ, йĕреççĕ. Хăш чухне арçынна тăн кĕртме хĕрарăм йĕрке хуралçисене те чĕнсе илет. Хальхинче те кил хуçине суда парассипе хăратать. Кайса шаккас-и? «Пурăнма ан вĕрент», – тейĕç. Арăмĕпе упăшки пĕр майлă пулса мана тапăнма пуçлĕç. Ирĕксĕрех шăла çыртса чăтма тивет. Хĕрарăм мăшăрне киле кĕртменни те пулкалать. Лешĕ таçта çĕр каçать – пĕлместĕп. Тепĕр тесен, вĕсем кӳршисен сăмахне хăлхана чикмĕç – хăйсемех ăслă. Çавăнпах хушша-хуппа кĕни усси пулмĕ.



Социаллă сете уçатăн та – унта манăн кӳршĕсенчен телейлĕрех çынсем те çук. Темĕн тĕрлĕ сăнӳкерчĕк кулленхи пурнăçăн лайăх енĕсене сăнлать. Пĕринче çемье шашлăк пĕçерет. Йĕри-тавра – чечек, упăшкипе арăмĕ, ачи-пăчи савăнăçлă. Сĕтел çине çăкăр, хăяр-помидор, сыр касса хунă. «Уй, мĕнле хитре, пăхса тăранма çук. Пирĕн те çутçанталăк ытамне лекесчĕ. Эсир каннă вырăна çитес килет. Тепрехинче пире те чĕнĕр», – хăйсен шухăшне палăртнă сăнӳкерчĕк курнисем. «Какайĕ тăраниччен çимелĕх те çитмерĕ», – тенĕччĕ кӳршĕ çурт çывăхĕнче тĕл пулсан. Те шухăшламасăр каланăран нумай тăмарĕ – вăрт! çеç киле кĕчĕ.

Тепринче вĕсем илемлĕ çуртра картлашка патĕнче тăраççĕ. «Эпир – ресторанта», – ăнлантарса çырни те пур. Сăнӳкерĕнме кĕрсе тухманши? Унсăрăн ресторанта апатланни çинчен кӳршĕ каласа кăтартĕччĕ. Те ĕненмеллех пулса тухман? Хушса çыракансем тупăнман. Ресторана кайнипе кама тĕлĕнтерĕн?

Виççĕмĕшĕнче çемйипех кафере салат çисе лараççĕ. «Унти апат хыççăн ачасем хăсса пĕтрĕç», – тенĕччĕ. Те пăсăлнă çимĕç лекнĕ ĕнтĕ? Çавăн чухне сăнӳкерĕнме ĕлкĕрнĕ апла.

Унтан кӳршĕсем яла кайса килнĕ. Ĕçленине мар, хĕвел çинче хĕртĕннине кăтартнă. Манăн кӳршĕн шыва кĕмелли 3 тĕрлĕ çи-пуç пулнине пĕлтĕм. Мĕншĕн пурне те илсе кайнă-ши? «Пĕри тепринчен чаплăрах. Улăштарса тăхăнма ӳркенмен», – сăмах илнĕ юлташĕсемпе пĕлĕшĕсем. Йăлт кураççĕ – йăлт хаклаççĕ.

Тутлă çиме, капăр тумланма укçа чылай кирлĕ. Çавăнпах коммуналлă тăкакшăн темиçе уйăх тӳлемен вĕсем. «Ĕлкĕрĕпĕр-ха», – аллине сулать кӳршĕ хĕрарăмĕ. Ăна çынсем пĕлмеççĕ. Унта-кунта çӳренине тĕнче курать, çакăн тавра калаçать. Шăпах хитре пурăннине кăтартма тĕллев тытнă та вĕсем.

Унччен те пулмарĕ, уйрăлчĕç хайхисем. Хĕрарăм ют хулара еркĕн тупрĕ. Интернетри сăнӳкерчĕксен альбомĕ тулсах пырать. Арçын патне кайса килет те тунсăхлама пуçлать. «Унпа çавăтăнса утнине куççуль витĕр аса илетĕп», – пĕлтерет хайхискер. Чим, хăйне качча тухман хĕр пек тыткаланă чухне шкул çулне çитмен ачисене ăçта хăварнă вара вăл? Эх, çаплипех хăйне тулли пурнăçпа пурăннăн кăтартасшăн. Çынсем йăлтах пĕлеççĕ, шарламаççĕ çеç.

Е тĕнче илтмелле алимент ыраtть кӳршĕ. Ăна, паллах, усаллă канашсем параççĕ.

Халĕ тата туй пĕркенчĕкĕпе сăнӳкерĕннĕ хĕрарăм. Çапла майпа çемье çавăрма шухăш тытнине палăртасшăн ахăр. Туйĕ хăçан пуласси кăна паллă мар. Ахăртнех, качча тухма та ыйтман ăна. Те телейлĕ ĕнтĕ вăл çав самантра?

**Екатерина ЦВЕТКОВА.**

*Александр АРТЕМЬЕВ*

# Ан авăн, шĕшкĕ!

**/Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 17-25-мĕш номерте/.**

Вăйлăччĕ эпĕ аманиччен, батальонта мана кĕрешсе çĕнекен çукчĕ те пулĕ. Майлăн ÿкрĕм пулас, ыратнинемĕнне туймарăм, нимĕç çине кушак пек сиксе лартăм та карланкинчен ярса илтĕм. Чĕрем виçесĕр курайманлăхпа тулчĕ, аллăмсене вăй килсе кĕчĕ.

Вăл та тĕреклĕ, икĕ хутчен мана хăй айне персе чикрĕ. Анчах эпĕ те парăнсах каймастăп. Хире-хирĕç пăхса хашкаса выртатпăр. Вăл аялта, эпĕ çиелте. Ÿсĕр пулас хăй, çăварĕнчен чăтма çук эрехпе ыхра шăрши перет. Хăрăлтатма пуçларĕ хайхи, аллисене вĕçертрĕ... "Эсĕ иккен вăл – Раççее пăхăнтараканни! Акă сана!" – пăвататăп фашиста.

Ай! Çав самантра çурăмран тем тирсе илчĕ, унтан сылтăм аяк пĕçерсе кайрĕ... сылтăм хулпуççи... Виçĕ хутчен лачлаттарса чикрĕ урнă нимĕç мана кинжалĕпе. Вĕлеретчĕ пуль, анчах аллисем вăйсăрланса çитрĕç пулас, хулăн фуфайка та çăлса хăварчĕ пуль мана...

Аллăмсем лăштах вĕçерĕнчĕç. Çăлăнăçне сиснĕ нимĕç ним тăвиччен малтан юлташне кăшкăрса чĕнчĕ, анчах ăна никам та пулăшма килмерĕ. Сывлăш çавăрса илнĕ тăшман каллех мана ыталаса илчĕ те, хăй çинчен илсе ывăтас тесе пуль, урисене чармакларĕ. Çакна çеç кĕтнĕччĕ эпĕ – латлаттартăм ăна ачаш вырăнтан чĕркуççипе... Гитлеровецăн аллисем лĕнчĕрех кайрĕç. Анраса ÿкрĕ çынçиен. Эпĕ ун автоматне, гранатисене вĕçертсе илтĕм те кабель татăкĕ патне аран сĕтĕрĕнсе çитрĕм, тăма вăйăм çук. Хăрах алăпа аппаланкаласа, шăлпа çырткаласа, кабель вĕçĕсене çыртса çыхрăм, хам аппарата линипе пĕрлештертĕм, аран çеç пĕрикĕ хут шăнкăрав аврине çавăртăм.

– Астров, эсĕ-и ку? Маттур! – илтĕнчĕ трубкăра комбат сасси. Атте пекех туйăнчĕ вăл маншăн çак самантра.

– Эпĕ ку, майор юлташ! Хăвăртрах пулăшăр: мана йывăр амантрĕç. Ман умра сывă фриц...

Алă чĕтре пуçларĕ, трубка тухса ÿкрĕ. Хам пĕтĕмпе турткаланса, сиксе чĕтретĕп. Çанçурăм тăрăх ăшă, çăра юн юхать. Ыратнине те туймастăп пек, анчах вăй пĕтсех пырать, куç хуралса килчĕ. Сылтăм хул пĕрре те хамăнни пек мар, тем пекех йывăрланса кайрĕ те хускалми пулчĕ. Сурансене сывă юлнă алăпа çыхас теттĕм, анчах çав самантра нимĕç тăрса ларчĕ.

– Хенде хох! – кăшкăртăм сулахай аллăмри автоматпа тĕллесе. Фриц аллисене çĕклерĕ. Ларатпăр çапла хире-хирĕç: вăл, халĕ çеç тăна кĕнĕскер, эпĕ, кĕç-вĕç тăнран кайса ÿкмеллескер. Нимĕç хускалмасть, чее вăл: эпĕ ларнă çĕртех юн юхтарса вилессе кĕтет пулас, ытлашши шав тăвасшăн мар.

Тĕлĕкри çыннăнни пек, пуçăм та, аллăм та çĕрелле усăнсах пырассăн, мĕнпур чун хавалĕпе вăй пухса тÿрленсе ларатăп. Хам вилессине те палăртас килмест тăшмана! Пĕрре шутлатăп та хам вилсе кайиччен ариеца та тирпейлесе хурас мар-ши тетĕп, анчах ман ăна чĕрĕллех тытас килет: вăл хăй мана чĕрĕлле тыткăна илесшĕн пулнă, акă халĕ хăех ман алла лекрĕ – ан тив, каласа патăр хăйсен вăрттăнлăхне.

Хама пулăшма туссем килессе шансах тăратăп – çавă çеç мана хавхалантарать. Пĕлетĕп, вĕсем мана çăлĕç, хăйсен тусне леш хăравçă, сутăнчăк ариец пек пăрахса тармĕç...

Кусăма хура чаршав хупларĕ, йывăррăн сывлакан пултăм, çапах та автомата пăрахмастăп, чĕркуççи çине хурсах нимĕçе тĕллетĕп. Хире-хирĕçех хамăр, пĕр виçĕ утăмра кăна ларатпăр, тĕллесех пемесен те лектерме пултаратăп. Çавăнпа та нимĕç хускалма шикленет.

Кашни минут сехет тăршшĕ туйăнать. Тинех кĕтсе илтĕм: "Петя", "Астрăп!" – тени илтĕнсе кайрĕ.

Пĕтĕм вăя пухса вĕсене хирĕç кăшкăртăм. Анчах та ман ăшран сасă тухмарĕ, хăрăлтатса çеç илтĕм. Тайăлсах кайрăм, çапах та тăшмана автоматăмпа тĕллетĕп. "Хенде хох, йыта!" – пăшăлтататăп хаяррăн.

– Петенька! Астрăп! – янăраса кайрĕ çумрах.

Аманнă хулран такам ярса тытрĕ те, суран чăтма çук ыратнăран каçăхса кайрăм...

Кайранхине вара тĕлĕкри пек çеç астăватăп.

Питрен усă çил ачашласан тин тăна кĕтĕм. Темле килкартине йăтса кĕнĕ иккен мана, наçилкка çине хунă; тул çутăлнă.

Старшина, сар мăйăхне турткаласа, санитарсене тем кăшкăрать /мĕнле тăрăшать иккен вăл маншăн!/.

Наçилкка тавра связистсем тăраççĕ. Вăйсăрланнă кусăмпа юратнă тусăмсене шыратăп. Пÿрт еннелле пăхрăм та – чĕрем пăчăртанса илчĕ: Лисука Викторпа Курман икĕ хулĕнчен тытнă та ÿкĕтлесе тем калаççĕ, Лисук ман еннелле кăтартса макăрать.

Мĕн калать-ши вăл? Илтĕттĕм сăмахĕсене! Анчах нимĕн те илтĕнмест... Викторпа Курман иккĕшĕ те салху, такама питĕ тарăхнă сăнлă.

Пĕтĕм чун хавалне пухса, сиксе тăрас килчĕ: тусăмсене, старшинана ыталăттăм! Лисука йăпатăттăм: "Ан макăр, савниçĕм", – тейĕттĕм. Анчах тапранма та, калаçма та вăй çук.

Сывпуллашма та памарĕç, çĕклерĕç те мана, пĕчĕк ача пек вăйсăрскерне, юратнă туссенчен, савнирен уйăрса, тасталла илсе кайрĕç.

Пĕлĕт, янкăр кăвак тÿпе кусăмра – нимĕç пĕлĕчĕ...

"Çук! Ку çамрăклăхăн вĕçĕ мар-ха, пуçламăшĕ кăна! – терĕм чунăма хытарса. – Ан авăн, шĕшкĕ!.."

* * *

Госпитальте икĕ уйăх ытла выртрăм. Эпĕ сывалса тухиччен вăрçă та пĕтрĕ, фашистла Германи парăнчĕ.

Батальона каç пулас умĕн çитрĕм. Связистсем Кенигсберг çумĕнчи пĕр пĕчĕк вăрманта вырнаçнă. Вăрманĕ ешернĕ ĕнтĕ, кайăк юрри илтĕнет. Илемлĕ çуркунне!

Хамăр связистсен шурă палаткисем курăнса кайрĕç... Чĕрем сикет. Вĕçнĕ пек утатăп. Шухăшра Лиза кăна.

"Мĕн тăвать-ши вăл халь? Кĕтет-ши мана, хыпарсăр çухалнă савнине?"

Тусăмсем мана сырса илчĕç те урра йăтма пуçларĕç. Шавланине илтсе Гончарук та палаткăран хаярланса тухрĕ. Мана курчĕ те ятлаçма мансах ума чупса пычĕ... Ыталасшăнччĕ пулас вăл, анчах салтаксем çине пăхса илчĕ те, мăнаçлăн ÿсĕркелесе алă тытса çеç саламларĕ.

– Гончарук патнех килтĕн эппин? – терĕ сар мăйăхне савăнăçлă пĕтĕрсе. – Питĕ хавас! Сан пек маттурсене яланах – тайма пуçăн!

Хаяр старшина чăнах та пуç таянçи пулчĕ, унтан хулпуççирен лăскаса хуллен çеç каларĕ:

– Лайăххăх çитерес пулать сана, начарланнă эс... интеллигенци!

Чунăм чăтмасть. Хам тусăмсемпе калаçатăп, кусăм кухня палатки çинчех. Кĕç-вĕç унтан гимнастеркăллă хĕр тухассăн туйăнать. Анчах эпĕ пăлханса кĕтни кăлăхах...

– Çул хыççăн вĕри шыв ĕçес килет ман, – тетĕп те кухньăна кĕрсе каятăп. Манпа пĕрлех Викторпа Курман кĕчĕç.

Вучах умĕнче ларакан палламан повара курсанах чĕрем ыратса кайрĕ. Тÿрех ăнланса илтĕм: Лисук кунта çук! Ăçта-ши вăл?

Чун тăвăнса килчĕ, çапах тусăмсем умĕнче хуйха палăртасшăн мар, кулкаласа çеç ыйтатăп:

– Ăçта-ха ман землячка?

Тусăмсем мана пĕр сăмахсăрах ăнланчĕç. Иккĕшĕ те хултан çупăрларĕç.

– Ан авăн, шĕшкĕ! – терĕ Ворончихин.

– Кăштах çилĕ вĕрнипе, – хушса хучĕ Курмангалиев.

Лизăна вăрçă пĕтсенех çар штабне чĕнсе илнĕ-мĕн, унтан вăл ăçта кайни паллă мар; килне таврăннă пуль терĕç тусăмсем.

– Санран çыру кĕтрĕ... – теççĕ мана тусăмсем. – Çырмарăн.

– Хам та сахал мар шутланă эпĕ çыру çырас пирки. Ытла та йывăр выртрăм çав, ырă хĕр пурнăçне инвалид шăпипе çыхас темерĕм, çавăнпа çыраймарăм. Халь тин ĕнтĕ ним тума та çук, вăл ăçтине пĕлмесĕр çыру ярасси çинчен ан та шухăшла...

Çук! Тупатăпах эп ăна, тусăмсем, пурпĕрех шыраса тупатăп!

Каллех салтак пурнăçĕ пуçланчĕ.

Часах пире хĕвелтухăçне самурайсемпе çапăçма ячĕç. Çурăм хыçне катушка çакнипех пĕтĕм Маньчжури тăрăх утса тухрăм. Мĕн чухлĕ кабель сÿтсе чĕркемерĕм пулĕ çак аласемпе? Тÿрĕ тăсса каяс пулсан – киле те çитĕ! Маньчжурири çапăçусенче тата икĕ хутчен амантăм.

Майĕпен хам хуйха та хăнăхрăм пек, анчах малтанхи юратăва мĕнле манăн-ха?

Старшина мана Лисукăн килти адресне пĕлтерчĕ. Темиçе çыру та çыртăм – хирĕç ответ килмерĕ. Çырусем хăвăрт çÿремеççĕ; çулĕ инçе, вунпилĕк пин çухрăмçке!

Нимĕн те юлмарĕ Лисука асăнмалăх. Пĕр юрă кăна, вилĕмсĕр юрă юлчĕ. Батальонта вăл юрра пĕлмен çын та çук: комбат та пĕччен чух юрлакалать, теççĕ. Гончарук вара, хăйĕн тăван юррисене тата вырăс халăх юррисене салтаксемпе пухăнса юрланă чух, пирĕн "Шĕшке" те шăрантармасăр хăвармастчĕ.

Çав юрăпах Хинган урлă каçрăмăр, Маньчжури сопкисем тăрăх утса тухрăмăр. Самурайсене аркатнă хыççăн пĕр каçхине Порт-Артур театрĕнче те юрласа патăмăр ăна. Кĕвви салтаксене те, китаецсене те питĕ килĕшрĕ – икĕ хутчен юрлаттарчĕç...

Пирĕн йăлана кĕрсе юлчĕ вăл юрă. Вăрçă хирĕсенчи паттăр ĕçĕмсем те, яшлăхăм та, малтанхи юрату та, тусăмсен ячĕсем те çак юрăпа çыхăнчĕç маншăн...

Хĕрсе калаçнă хушăрах Астров сасартăк шăпланчĕ, унтан йăлт! кăна сиксе тăчĕ те, "Пăрахут, ачасем, пăрахут!" тесе савăнăçлăн кăшкăрса ячĕ.

Ун сассине ытти ушкăнри салтаксем те илтрĕç. Шавлă хускалу пуçланчĕ.

Астров хыпаланса чупкалама тытăнчĕ.

– Чимĕр-ха, каласа пĕтермерĕр эсир, – астутартăм ăна.

– Каçарăр, – терĕ вăл ман енне çавăрăнса, – ав пăрахут килет, çакăнпа ман юрату историйĕн иккĕмĕш тапхăрĕ пуçланать, вăл мĕнле пуласса хам та пĕлместĕп-ха.

– Ăнланаймарăм-ха сире, Астров.

– Акă çыру – Лисук çырăвĕ... – Сержант кăкăр кĕсйинчен виç кĕтеслĕ конверт кăларса кăтартрĕ. – Анчахрах çартан таврăннă вăл, халĕ мана ав хăнана чĕнет. Çырăвĕнче леш тĕлĕк пирки те асăннă: "Йăлтах чăн пулчĕ вăл, тĕлĕк мар... Хăяймарăм ун чух сана тĕрĕссине пĕлтерме", – тет... Халь акă эпĕ те киле таврăнатăп. Манăн та Çĕмĕрле станцинче анмалла, Лисук патне пĕрлех кĕретпĕр, ун чух лайăххăх паллашăр. Халĕ пăрахут çине ларма хатĕрленер.

Эпир кайма пуçтарăннă хушăра пирĕн ума сар мăйăхлă, улăпла пысăк гвардеец килсе тухрĕ.

– А-а! – терĕ вăл пире курсан. – Кунта иккен эсир, мушкетерсем! Шыраса хăшкăлтăм...

Туссене виççĕшне те вăл пĕр ытама тытса пăчăртарĕ. Унтан ман енне çаврăнчĕ те çап-çут аттисемпе шаклаттарса чыс пачĕ:

– Гвардии старшина Гончарук!

Вара каллех хăйсен тусĕсене ыталарĕ:

– Ну, тăванăмсем! Уйрăлатпăр эппин?.. Миçе пин çухрăм пĕрле утрăмăр... Ан манăр Гончарука, усал сăмахпа ан асăнăр... Ну, Ворончихин... Курмангалиев... Астров!.. Нихçан та эпĕ сире...

Писиххи çумĕнчи фляжкине вĕçертсе илчĕ те шăлавар кĕсйинчен гильза тĕпĕ кăларчĕ.

– Ну, шăллăмсем... ăмăрткайăксем... ачамсем!..

– Лайăх сыхла эс, батько, Порт-Артура! Асту, ан авăн кăштах çилĕ вĕрнипе, – терĕç виçĕ сержант.

– Лайăх ĕçлĕр эсир унта... Тăван çĕршывра! Эпир кунта яланах сыхă пулăпăр, – тавăрчĕ старшина. Вара пурне те ыталса чуптурĕ те мăйăхне хĕрхенмесĕр турткалама пуçларĕ. Кусĕсем шывланчĕç унăн... Виçĕ тантăш ăна ыталаса илчĕç те юратнă юррине юрласа ячĕç.

Старшина кусĕсенчен икĕ тумлам куççулĕ пăчăртанса тухрĕ, Гончарук та, манран именсе, çаврăнса тăчĕ те кусĕсене гимнастерка çаннипех шăлса илчĕ, ним чĕнмесĕр тантăшсене юлашки хут ыталаса чуптурĕ, такам çине тарăхнă пек е тем çухатнă пек аллине хытă сулчĕ те хăвăрт аяккалла уттарчĕ...

Пирĕн пăрахут тинĕсе тухнă чух портран тÿпенелле ракета ярăнса хăпарчĕ: кунта Гончарук, пире салютласа, ракетницăран печĕ. Вăл халăхран аякра, пĕр çÿллĕ чулту çинче, чылайччен алă сулса тăчĕ, юлашкинчен курăнми пулчĕ.

Порт-Артур та кусран çухалчĕ. Сывă пул, мухтавла паттăрлăх хули – вырăс салтакĕсен чапĕ! Сывă пулăр, паттăр гвардеецсем! Сывă пул, Гончарук!

Сарă тинĕс хумĕсем çийĕн тăван юрă мăнаçлăн та илемлĕн янăраса кайрĕ:

Ан авăн, шĕшкĕ, ан авăн та
Ан авăн, шĕшкĕ, ан авăн
Кăштах çилĕ вĕрнипе...

1946-1948.
Порт-Артур – Шупашкар.

# Чăрсăр та пултаруллă тутар...

*Вăл пур енĕпе те хыткукар пулнă – укçа-тенкĕ енчен те, пурнăç тĕлĕшпе те. Вăхăтне, вăйне, пултарулăхне, туйăмне вара пĕр шелсĕр тăкакланă. Анчах кирек мĕншĕн те, вăхăт çитсен, тӳлеме лекет...*



Рудольф Нуриевăн официаллă биографийĕнче вăл Иркутскра çуралнине палăртнă. Тĕрĕссипе, унăн хушамачĕ те Нуриев мар, Нуреев – ăна вăл чапа тухсан улăштарнă. Çут тĕнчене те вăл Иркутскра мар, малалла вирхĕнекен пуйăсра килнĕ. Ĕмĕрне те çаплах ирттернĕ – тĕнче касса çӳресе: ирхине Парижра, каçхине Лондонра, тепĕр кун Монреальре.

Ăна çут тĕнче курма пулăшакан пуйăс 1938 çулхи пуш уйăхĕн 17-мĕшĕнче Инçет Хĕвелтухăçнелле çул тытнă. Шăпах вăтам Ази çеçенхирĕсемпе Монголи тăвĕсен хушшине çитсен çари кăшкăрса ярса вуннăри аппăшĕн Розăн аллине тухса выртнă арçын ача. Вĕсен амăшĕ Фарида виçĕ хĕр пĕрчийĕпе: Розăпа, Розидапа, Лиляпа – пĕрле упăшки хĕсметре тăракан вырăна çула тухнă. Хамет, арçынна çапла чĕннĕ, Совет çарĕн политрукĕ пулнă.

### "Чингисхан тăхăмĕ"

Рудольф тăванĕсемпе яланах мăнаçланнă. Вăл чăнласах Чингисхан тăхăмне аса илтернĕ. Ун пирки çаплах каланă. "Пĕр енчен тутар эпĕ, тепĕр енчен – пушкăрт. Вĕсен юнĕнче тискер кайăк вăйĕ тапса тăрать, – теме юратнă каччă ӳссен. – Çав тискер кайăк – эпĕ".

Кĕçех Хамет Нуреева Мускава куçарнă. Унран, паллах, çемйи те юлман. Арçын тутар хресченĕ кăна пулнă-ха, анчах та çĕршыври 1917 çул хыççăнхи улшăнусемпе ăнăçлă усă курса юлнă, майора çитнĕ. Хамет çар-промышленноç комплексĕнче ĕçленĕ май тăтăшах командировкăсене çӳренĕ. Унăн чун киленĕçĕ шăпах каярахпа ывăлне куçнине калаççĕ.

Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи пуçлансан Хамет та тăшмана хирĕç çапăçма тухса каять. Çемье амăшĕн тăван кĕтесне Пушкăртстана куçать. Ашшĕсĕр Рудольф питĕ лăпкă ача пулса ӳсет. Уфара çĕрсем ытла та вăрăм тата сивĕ пулни ача асĕнче ĕмĕрлĕхех юлать. Сăмсаран юхакан шĕвек шăнса ӳт çумне çыпăçнине те манмасть вăл. Шкула кайма вăхăт çитсен вара çи-пуç ыйтăвĕ сиксе тухать. Рудольфа пĕр аппăшĕн пальтоне тăхăнтараççĕ...

### Ташă тыткăнĕнче

Кичем. Сивĕ... Анчах та Уфара опера театрĕ пулнă. Вăхăтĕнче унта Шаляпин та юрланă. Фарида пур ачине те пĕр билетпа балет курма кĕртсе ярать – шăпах Пысăк театр пынă-мĕн. Тĕп партире – пушкăрт балерини Зайтуна Насретдинова. Рудольф пуçне çухатать. Малашне унăн пĕртен пĕр шухăш – балет... Сакăр çул вăл ташăпа кăна аташать. Урăх нимĕн те курмасть те, илтмест те.

1948 çулта ăна аппăшĕ Роза Учительсен çуртне Анна Удальцова патне илсе каять. Анна Ивановна Дягилев ушкăнĕпе гастрольсене çӳренĕ, Павловăпа, Карсавинăпа пĕрле ташланă, Шаляпинпа туслă пулнă. Рудольфа хĕрарăм генипе танлаштарнă.

Анчах вăрçăран таврăннă ашшĕпе ывăлĕ хушшинче хирĕçӳ сиксе тухнă. Хамет ташă арçын валли мар тесе шухăшланă. Ывăлне ташăпа юрă-кĕвĕрен пистерес тесе хĕненĕ те. Сăмах май, ӳссе çитсен Нуреев "Нихăçан та каялла çаврăнса ан пăх" девизпа пурăннă.

### 17, 17, 17...

...14 çулта арçын ача ташлас тесех килтен тухса тарнă. Пултарулăхне кура ăна вĕрентекенĕсем Ленинграда Ваганова балет училищине яма тĕв тунă. "Эпĕ пурне те манма пултарăп, анчах та мана Ленинграда илсе каякан пуйăса мар... Ку çурла уйăхĕн 17-мĕшĕнче пулса иртрĕ. Эпĕ тĕшмĕше ĕненместĕп, анчах та пурнăçăмри пĕлтерĕшлĕ пулăмсем тĕрлĕ çулта шăп çак кунпа çыхăннă /çĕртме уйăхĕн 17-мĕшĕнче Францире юлнă, пушăн 17-мĕшĕнче çуралнă.../ ".

### Пушкинăн юратнă вĕренекенĕ

Çулталăка яхăн Рудольф пĕрремĕш вĕрентекенĕ ятлăçнине чăтнă. Унтан урăххи патне куçнă. Нуриевпа ĕçлеме пуçланă тĕле Александр Иванович Пушкин çĕршывра паллă пулнă. Вăл вĕрентнипе Рудольф тинех çунат сарнă. Нуриев Пушкинăн юратнă вĕренекенĕ пулнă. Вăл педагогне нихăçан та кӳренмен. Пушкин Рудольфа çемйине йышăннă. Ку çемьере Нуриева юратнă...

### Арçын пĕлтерĕшĕ улшăннă

1961 çулхи çу уйăхĕн 11-мĕшĕнче Киров театрĕ Парижа вĕççе кайнă. Çакăн хыççăн вĕрентекенпе вĕренекен урăх тĕл пулман. Институтран вĕренсе тухнă хыççăн ăна Пысăк театр та чĕннĕ. Анчах та Нуриев Киров театрне суйласа илнĕ. Унта, çулне кура мар, солист пулса тăнă. Вăл вăхăтра совет балетĕнче арçын пĕлтерĕшĕ пысăк пулман – вăл балеринăна кăна тытса тăнă. Нуриев çак шухăша улăштарнă. Вăл чи малтан тенĕ пек сцена çине трикопа тухнă. Унăн ташши хăватпа палăрса тăнă. "Рудольф çӳлелле кăна тăсăлатчĕ, çапла питĕ илĕртӳллĕ курăнатчĕ", – çырнă унăн стилĕ пирки. Анчах та Нуриев... арçынсене юратнă. Çакăншăнах ăна кĕçех гастрольсене çӳреме чарнă. Совет Союзĕнче секс та пулман та, арçынсен çыхăнăвĕ пирки мĕн каласмалли пур?

### Ирĕкре...

Лару-тăру кĕтмен çĕртен улшăннă. Киров театрĕн солисчĕ чирлесе ӳкнĕ. Юлашки самантра гастроле Нуриева кăларса яма йышăннă. Вунă кунран вăл Париж оперин сцени çине тухнă. Парижра Рудольф Франци балечĕн çăлтăрĕсемпе тата Клара Сентпа туслашнă. Хĕр Франци культура министрĕн ывăлне каччă тухма хатĕрленнĕ. Ку вара унăн умĕнче нумай алăка уçнă.

Хăй "кăваккисен" йышĕнчен пулнине Рудольф пытарман. Çакна пĕлсен Мускав ăна киле таврăнма хушнă. ...Ушкăн черетлĕ концерта Лондонра кăтартма хатĕрленсе аэропорта пуçтарăннă. Рудольфа Мускава таврăнмалли билет пырса тыттарнă: "Санăн Кремльте ташламалла". Çапла пулмасăр! Хăйне мĕн кĕтнине Нуриев лайăх ăнланнă. Вăл Клара патне шăнкăравланă. Хĕр ăна хăй патне пыма чарнă – кил умĕнче совет агенчĕсем çӳренĕ. Клара икĕ полицейскипе пĕрле Рудольфа ăсатма аэропорта пынă. Питĕнчен чуптунă май пăшăлтатнă: "Полицейскисем патне пырса хăв Парижра юлма шухăшланине кала". Ырă мара сиссе агентсем Нуриева айккинелле хĕсме пуçланă. Анчах та вăл вĕçерĕнме пултарнă, полицейскисен енне тигр пек сикнĕ: "Манăн ирĕклĕ пулас килет!" Тепĕр кунах пур хаçат та тенĕ пек совет ташăçи ирĕке суйланине пĕлтернĕ. Кĕçех куçăмсăр майпа суд пулнă – Нуриева Тăван çĕршыва сутнăшăн айăпласа çичĕ çуллăха ирĕклĕхсĕр хăварма йышăннă. Çак йышăну нихăçан та пăрахăçа тухман.

Рудольф чикĕ леш енче юлнине пĕлсен Александр Ивановичăн инфаркт пулнă. Вăл урамрах ӳкнĕ. Ун пирки пурте ӳсĕр тесе шухăшланă. Ара, ятне ыйтсан арçын кашнинчех "Александр Пушкин" тесе хуравланă...

Нуриевăн вара депресси пуçланнă. Анăçра та пурнăç юмахри пек мар иккен. Йăла-йĕрке пачах урăх. Шкулсем вăйсăр. Икĕ уйăхран Нуриев Кювас маркизăн труппинче ташлама пуçланă. Кĕçех ăна Лондонри король балетне чĕнсе илнĕ. Кун пекки историре пулман-ха – труппăна Британи граждансене кăна йышăннă. Рудольф пултарулăхĕ хăйĕн ĕçне тунă. Унта Нуриев 15 çул ташланă. Марго Фонтейн унăн партнерĕ пулса тăнă. Кĕçех çак мăшăр валли Аштон балетмейстер ятарласа "Маргарет тата Арман" балет лартнă. Рудольфпа тĕл пулнă тĕле Фонтейн 43-ре пулнă /Рудольф 24-ра/, унăн карьери вĕçленсе пынă. "Тутар кнеçĕпе" "Англи дами" – вĕсем пирки МИХсем çапла çырнă – Нью-Йорка парăнтарнă. Вĕсем Гиннесс рекорчĕсен кĕнекине те лекнĕ. Никама та вĕсем чухлĕ сцена çине чĕнсе кăларман. 1964 çулта Венăра "Лебединое озеро" хыççăн артистсене сцена çине куракан чĕннине пула чаршав сакăрвунă хут ытла уçăлнă!

### Çунтаракан пăр

Хăй арçынсене юратнине вăл никамран та пытарман. Унăн юлташĕсен хушшинче Фредди Меркьюри, Элтон Джон, Жан Маре пулнине калаççĕ. Анчах та чи хĕрӳ туйăмсем Эрик Брунпа çыхăнни паллă.

Малтанах Рудольф вăл ташланине килĕштернĕ, кайран – хăйне. Брун Нуриевран 10 çул аслăрах тата питĕ илĕртӳллĕ пулнă. "Мана ташласа вăл кăна тыткăнлама пултарчĕ, – палăртнă Рудольф. – Ун пирки сивĕ теççĕ. Чăн та, вăл пăр пекех пĕçертет".

Вĕсем вĕçĕмех хирĕçнĕ. Классика. Пĕри, тутарĕ, вĕри, тепри, скандинавĕ, лăпкă. Тутар "мăшăрне" вĕçĕмех улталанă, лешĕ тарăхнă, япалисене пуçтара-пуçтара тухса кайнă. Рудольф каçару ыйтнă та унтан каллех улталанă... Эрик чăтса çитереймен, Австралие çитиех тухса тарнă. Тĕрĕссипе, Нуриев пултарулăхĕ те канăç паман ăна. Пĕрлех юлнă тăк Эрик нихăçан та Рудольф чапĕ мĕлкинчен тухаймĕччĕ. Анчах вăл Нуриевран чăнласах пултаруллăрах пулнă...

Рудольф ун хыççăн вĕçнĕ. Хăра-хăрах. Хăйне КГБ тĕнчипех шыранине пĕле тăркачах. Каирта чутах агентсен аллине лекмен хайхи. Самолет çĕр çине анса ларсан пилот пурне те салонран тухма ыйтнă. Нуриев çеç ларса юлнă. Стюардессăна хăйне пытарма ыйтнă вăл. Лешĕ малтанах шанман. Анчах та чӳречерен пăхнă та самолет енне иккĕн ваксказа утнине курнă. "Пытанăр туалетра", – пăшăлтатса ĕлкĕрнĕ хайхи. Агентсем туалет алăкне шакканă май çӳçĕ шураласа пынине Нуриев тĕкĕр çине пăхса сăнаса ларнă.

### Тӳлев...

Хăйне шеллемесĕр ташланă вăл. Çулталăкне 300 ытла спектакль панă. Кунне, ăçта май килет çавăнта, 4-5 сехет çывăрнă. "Антарктидăра кăна ташламан пулĕ вăл", – теççĕ ун çинчен. Кунĕпе репетици, концерт, сцена, куракан... Çапла 1-2 мар, теçетке-теçетке çул иртнĕ. Пурнăçран мĕн май пуррине йăлт илме тăрăшнă вăл, çакăншăн мĕн чухлĕ тӳлемеллине кăна шухăшламан. Совет режимĕнчен ирĕке тухнăскер анăçра совеç çуккине хăнăхнă. Мĕн килĕшнине йăлт туянмалла пулнă унăн. Пуянлăх пăснă. Анчах та Рудольф хыткукарлăхне пурте пĕлнĕ. Ыркăмăллăх акцийĕсене хутшăнман вăл. Тĕлĕнмелле пысăк гонорарсем ыйтнă. Укçатенкĕ нихăçан та чиксе çӳремен, ресторанра тата ытти çĕрте уншăн юлташĕсем тӳленĕ. Çав хушăрах тĕлĕнмелле хаклă антиквариат туяннă. Тусĕсем çакна Уфара иртнĕ выçă ачалăхпа çыхăнтарнă. Хваттерне вăл нимрен ытла арçын çарамас кĕлеткине сăнлакан скульптурăсемпе тултарнă. Тĕнче тĕрлĕ кĕтесĕнче çуртсем туяннă: Монако, Лондон, Париж, Нью-Йорк, Вирджини, Кариб, Неаполь... Вăтаçĕр тинĕсре икĕ утрава 40 миллион доллар тӳлесе илнĕ. Нуриев пуянлăхĕ 80 миллион доллар пулнă теççĕ. Çапла иртнĕ генийĕн 20 çулĕ...

Вăйĕпе сывлăхĕ пуянлăхĕ пекех чикĕсĕр туйăннă. Анчах та туйăннă кăна çав. Шăпа хакĕ ытла та пысăк пулнă. 1984 çулта хăрушă диагноз лартнă – СПИД. Чир организмра 4 çул каяллах пуçланнине те палăртнă. Чăн та, Рудольф малтанах хăйне лăпкă тытнă – унăн укçи-тенки темĕне чире те çĕнтерме пултарасса шаннă. Анчах шăпа хăрушă парнесем кăна хăварнă ун валли. 1986 çулта Эрик чирлесе ӳкнĕ. Кĕске вăхăтрах вилнĕ. Официаллă верси – рак. Усал чĕлхесем вара вăл СПИДпа чирлине каласнă. Юлашки кунĕсене вĕсем пĕрле ирттернĕ. Эрикпа пĕрле хăйĕн пурнăçĕн пĕр тапхăрĕ çухалнине те ăнланнă Рудольф. Вăл пĕччен тăрса юлнă. Анчах та шанăçне çухатман. "Мĕн вăл СПИД? Эпĕ – тутар! Ăна та майласа яратăп..." Анчах та вăхăчĕ нумай юлманнине вăл пурпĕр ăнланнă.

Çулталăкран вăл Уфара амăшĕ вилнине пĕлет. 1976 çултах культура ĕçченĕсем ятарлă комитет йĕркелесе вунă пин ытла алă пуснине пуçтарнă – Фаридана СССРтан ывăлĕ патне тухса кайма ирĕк памашкăн. АПШ 42 сенаторĕ те çĕршыв ертӳçисемпе калаçнă. ПНО та вĕсем майлă пулнă. Çапах та влаçа Горбачев килсен кăна Нуриева тăван çĕршыва килме ирĕк панă – вилекен амăшĕпе сывпуллашма. Хĕрарăм ку вăхăталла никама та палламан ĕнтĕ.

Тата пилĕк çултан Рудольф Маргопа ĕмĕрлĕхех сывпуллашнă. Ун хыççăн хăй те тата икĕ çул çеç пурăннă. 1990 çулта Нуриев иккĕмĕш хут Раççее килсе кайнă. Тепĕр çултан чирĕн юлашки тапхăрĕ пуçланнă. "Стена çинчи сехет манăн юлашки кунăмсене шаккаса шутлать", – тенĕ Рудольф. 1992 çулхи юпа уйăхĕн 8-мĕшĕнче креслăра аран ларакан Нуриева Франци чи пысăк наградипе чысланă – вăл хисеплĕ легион орденне тивĕçнĕ. Çакăн хыççăн пĕр вăхăт хăйне лайăхрах туйма пуçланă. Анчах та кĕçех больницăна лекнĕ. Унтан тухайман... Париж ун умĕнче чаппа пуянлăх алăкне уçнă, Франци тĕп хулиех ун хыççăн алăка хупнă.

1993 çулхи кăрлачăн 6-мĕшĕнче вăл шăппăн вилсе кайнă. Ун çумĕнче медсестра тата аппăшĕ Роза пулнă. Роза ăна çут тĕнчере кĕтсе илнĕ, вăлах ăсатса янă.



# Саламлатпăр



*Çуллахи ăшă та тӳлек кун, июлĕн 2-мĕшĕнче, çут тĕнчене килнĕ чи юратнă та хаклă çыннăмăра – мăшăра, аннене, асаннене, кукамая – Елчĕк районĕнчи Аслă Елчĕкре пурăнакан <u>Александра Александровна КУЗЬМИНАНА</u> – 55 çулхи юбилейпе чун-чĕререн тухакан ырă та çепĕç сăмахсемпе саламлатпăр. Пире, ачусене, юратса ӳстернĕшĕн, халĕ те пирĕншĕн тĕрек пулнишĕн сан умăнта çĕре çити пуç тайса тав тăватпăр. Тулăх пурнăç, тулли телей, уйăх пек çутă кунçул, хĕвел пек ăшă та ырă кăмăл, инçе çул евĕр вăрăм ĕмĕр, хурçă пек çирĕп сывлăх сунатпăр. Чир-чĕр мĕнне пĕлмесĕр пирĕн тăван кил ăшшине упраса нумай çул пурăн. Ачусемпе мăнукусен пархатарне ĕмĕр-ĕмĕр курмалла пултăр.*

*<u>Салампа – мăшăру, ывăлупа кинӳ, хĕрӳсем, кĕрӳвӳ, виçĕ мăнуку.</u>*

## И-ХИ-ХИК

**Сĕтел çине питĕ яка клеенка витрĕм. Çĕрĕпе таракансем ӳкнине итлесе выртрăм, çĕрĕпе вăрçăнчĕç хайхисем. Эрнерен коньки сырма вĕренчĕç.**

* * *

**Полици ĕçченĕ каçхи дежурствăран килне таврăнса хывăнса ĕлкĕрет кăна, çывăрмалли пӳлĕмрен арăмĕ кăшкăрать:**

**– Чуп-ха лавккана, сĕт туянса кил!**

**Мĕн тăвăн, арăм ыйтать тĕк пăхăнмах тивет. Хайхи мăкăртата-мăкăртата каяллă тăхăнать, лавкканаваскать.**

**– Сана мĕн, ĕçрен кăларса яман пуль? – ыйтать ăна курсан сутуçă.**

**– Çук-çке, мĕншĕн апла ыйтатăн?**

**– Ара, пушарнăй формине тăхăннă та...**

* * *

**Пĕр арçын тепринчен ыйтать:**

**– Май пулсан мĕн суйласа илĕттĕн: пилĕк пин доллар-и е пилĕк хĕрача-и?**

**– Пилĕк хĕрача.**

**– ???**

**– Халĕ вĕсем манăн саккăрăн...**

* * *

**Тĕрĕслев ĕçĕн пĕр варианчĕ çынсене пĕр чăмăра пуçтарать...**

* * *

**Невропатолог патне хĕрарăм тăваттăри ывăлне илсе пынă.**

**– Кала-ха: кушакăн миçе хăлха? – ыйтать тухтăр арçын ачаран.**

**– Иккĕ.**

**– Ури вара?**

**– Тăваттă.**

**– Куçĕ?**

**– Иккĕ.**

**– Хӳри пур-и тата çав чĕрчунăн?**

**– Анне, ку тăмсай кушака нихăçан та курман пулас...**

* * *

**– Сидоров! Манăн чăтăмлăх вĕçленчĕ! Ыран шкула ачусăр ан килнĕ пултăр!**

**– Виçмине вара?**

* * *

**Урокра пĕр арçын ача – теприне:**

**– Хитре ӳкеретĕн вара эсĕ! Санăн ӳкерчĕкне курса манăн хырăм выçса кайрĕ.**

**– Хĕвел тухни хырăма выçтарать-и вара?**

**– А-а-а... Эпĕ сана ăшаланă çăмарта ӳкернĕ тесе...**

* * *

**Геометри урокĕ пуçланнă.**

**– Киле панă ĕçе кам пурнăçланă? – вĕренекенсемшĕн чи хăрушă ыйту янăраса кайсан пурте пуçĕсене чикнĕ. Алă çĕклекен çуккине кура вĕрентекен доска умне Вовочкăна чĕнсе кăларнă.**

**– Мĕнех, – сумлăх пуçланă арçын ача. – Чи малтанах ABCD виçкĕтеслĕхе пăхса тухăпăр...**

* * *

**– Ĕнер шкула мĕншĕн килмен эсĕ?**

**– Пичче чирлесе ӳкнĕ.**

**– Эсĕ вара мĕн турăн?**

**– Унăн велосипечĕпе ярăнтăм.**

* * *

**– Шкула çити лартса кайăрха мана, – алă çĕклесе машинăна чарăнма ыйтать Вовочка.**

**– Анчах та эпĕ тепĕр еннелле каятăп, – тет руль умĕнчи.**

**– Пушшех те аван, – савăнса каять арçын ача.**

* * *

**– Петя, ашкăнчăксем тапăнсан мĕнле хӳтĕленĕн вĕсенчен?**

**– Уй, эпĕ-и? Эпĕ айкидо, дзюдо, каратэ тата ытти хăрушă... сăмахсем пĕлетĕп!**


## РЕКЛАМА ТАТА ПĔЛТЕРӲСЕМ

### СУТАТĂП ПРОДАЮ

**2.АКЦИЯ! БЛОКИ КЕРАМЗИТОБЕТОННЫЕ,** пропаренные, вибропрессованные 20х20х40 – 33 руб., 12х20х40 – 28 руб., 9х20х40 – 24 руб. Высокое качество. Доставка манипулятором. Т. 8-967-470-46-77.

**3.АКЦИЯ! ПЕСОК, ГРАВМАССУ,** щебень, керамзит. По низким ценам. Доставка. **Т. 8-967-470-46-77.**

**4.Немецкие ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Пенсионерам скидки. Замер. Доставка – бесплатно. Без вых. **Т. 8-987-576-65-62.**

**5.Блоки керамзитобетонные** 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40 пропаренные, гидровибропрессованные заводские от производителя – недорого, **цемент, песок.** Доставка. Разгрузка. Без выходных. Кассовый чек, документы. Т. 8-960-301-63-74.

**7.ГРАВМАССУ, ПЕСОК, щебень, керамзит,** чернозём. Дёшево. Доставка. Т.: 8-903-358-17-70, 8-927-668-97-13, 38-97-13.

**8.Гравмассу,** песок, **щебень,** торф, кирпичный бой, **керамблок, керамзит.** Пенсионерам, уч. ВОВ – скидки. Т. 8-905-199-01-22.

**9.Гравмассу, песок, щебень, керамзит.** Дёшево. Доставка. Т.: 8-903-358-30-21, 44-30-21.

**10.Сетку-рабицу** от производителя – более 80 видов, сетку сварную – более 30 видов, **профнастил,** гвозди, **столбы,** проволоку. Изготовление ворот, калиток. Доставка. Выездная сварка /генератор/. Грузоперевозки. Т.: 68-05-67, 34-70-70.

**11.Срубы для бани.** Т. 37-28-74.

**15. Кирпич** любой. Т. 89613393363.

**17. Песок, гравмассу, керамзит,** чернозём, **навоз.** Доставка. Т. 8-905-197-40-19.

**21.Керамблоки, гравмассу, песок.** Т.: 89033456307, 89176757528.

**22.Немецкие ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Пенсионерам скидки. Замер, доставка – бесплатно. Без вых. **Т. 89278558355.**

**23.Гравмассу, песок,** бой кирпича, **щебень.** Д-ка. Т. 89061355241.

**24.ГРАБЛИ,** косилки, **сажалки,** копалки, **окучники, опрыскиватели.** Доставка. Т. 89278533596.

**26.КЕРАМБЛОКИ** /20х20х40, 12х20х40, 10х20х40/, **керамзит** в мешках, **цемент,** кирпич, **к/кольца.** Доставка. Т. 8-903-346-85-56.

**30.Гравмассу, песок, щебень, керамзит.** Д-ка. Т. 89053465671.

**31.Гравмассу, песок, керамзит,** кирп. бой. Д-ка. Т. 89033225766.

**37.**Ворота, калитки, **заборы,** навесы. **Ковка,** кровля, обшивка сайдингом. Общестроительные и сварочные работы. Замер. Д-ка. Установка. Гарантия. **Пенсионерам – скидки.** Т.: 8-902-288-14-47, 38-75-74, сайт:metalservis21.ru

**41.Гравмассу, гравий, песок** речной, карьерный; **щебень,** керамзит. Д-ка. Т. 89278404595.

**48.Керамблоки, бой** кирпича, бетона; сваи, **ОПГС,** песок, **ФБС.** Т. 89063814420.

**58.Гравмассу, щебень, песок, керамзит,** бетон, чернозём. Д-ка. Недорого. Т. 89276687015.

**65.Песок, гравмассу,** бой кирпича, **щебень** известк-й, чернозём. Т.: 89196567752, 89093005705.

**66.Гравмассу, песок,** бой кирпича, **щебень.** Уч-м ВОВ и пенсионерам – **скидки.** Т. 89176769379.

**89.БЛОКИ керамзитобетонные** от производителя. Высокое качество. Низкие цены. Доставка. Документы. Т. 8-937-386-66-29.

**123.Гравмассу, песок, навоз.** Доставка по старым ценам. Т. 8-927-850-28-21.

**133.СЕТКУ-РАБИЦУ** от производителя около 100 видов, **сетку** сварную, кладочную, штукатурную; **проволоку,** столбы. Доставка. Т.: 68-30-45, 8-937-952-22-11.

**138.ОКНА, ДВЕРИ. Обшивка.** Замер, доставка, демонтаж бесплатно. **Гарантия** 15л. Т. 89196624097.

**170.Профнастил, металлочерепицу, сайдинг.** Т. 89033220479.

**172.Тротуарные ПЛИТЫ, брусчатку.** Доставка, укладка. Скидки. Гарантия. Т. 89033220479.

**180.Комбикорм, зерно, отруби,** муку горох-ю. Д-ка. Т. 89373916016.

**183.**Окна Чувашии. **ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА, жел. двери.** Т. 89050281182.

**190.Заборы,** откатные **ворота, козырьки, навесы.** Т. 89176500640.

**205.Цемент,** песок, **гравмассу,** щебень, **керамзит, блоки.** Д-ка. Т.: 89278497675, 89278497674.

**295.Песок,** ОПГС, **щебень,** известь, асфальтную крошку, **навоз,** землю, **торф.** Доставка. Т.: 89196741016, 89603003816.

**322.ПЕСОК, щебень, гравмассу, керамзит.** Д-ка. Т. 89033220479.

**361.АКЦИЯ! КОЛЬЦА** железобетонные для колодцев и канализаций 0,7; 1; 1,5м. Бурение. Д-ка манипул-м. **Т. 89674704677.**

**364.Пластиковые ОКНА, ДВЕРИ.** Замер – бесплатно. Пенсионерам – скидки. Т. 89278447811.

**464.Гравмассу, песок, щебень, чернозём.** Д-ка. Т. 89603098191.

**465.Гравмассу, песок, щебень, чернозём.** Д-ка. Т. 89093054261.

**501.Гравмассу, песок** строительный, **щебень.** Т. 89520269954.

### ТУЯНАТĂП КУПЛЮ

**18.Бычков, тёлок, коров, лошадей.** Т. 8-962-599-47-06.

**39.Коров, бычков и лошадей.** Т. 8-960-310-98-78.

**109.Бычков, тёлок, коров, свиноматок.** Т. 8-937-014-49-97.

### ПУЛĂШУ УСЛУГИ

**38.ЧИСТКА КОЛОДЦЕВ.** Т. 8-961-342-90-59.

**45.Лечение алкоголизма, табакокурения.** Т.: 89030662902, 89276673368.
*Лиц. 5001001230 от 08.06.2007. Имеются противопоказания, проконсультируйтесь со специалистом.*

**51.Бурение колодцев,** скважин, **кольца колодезные** высококачественные. Доставка. Тел.: 8-927-847-71-43, 8-937-379-00-80.

**152.Бурение скважин** на воду. Т. 8-960-302-12-93.

**171.Кровельные, фасадные работы.** Т. 8-903-322-04-79.

**246.Бурение скважин** на воду. **Чистка** старых **скважин.** Т. 8-906-381-60-37.

**278.Кровля,** обшивка сайдингом, утепление. Т. 89176500640.

**466.Бурение скважин** на воду до 90 м – **недорого.** Т. 89278625531.

### ĔÇ РАБОТА

**297.Требуются каменщики, монолитчики** в Москву. Оплата своевременная. Т. 8-962-321-70-11.



**« ХЫПАР »**

Издательство çурчĕ" автономи учрежденийĕ

**УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ: ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ИНФОРМАЦИ ПОЛИТИКИН ТАТА МАССĂЛЛĂ КОММУНИКАЦИСЕН МИНИСТЕРСТВИ, ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ИНФОРМАЦИ ПОЛИТИКИН ТАТА МАССĂЛЛĂ КОММУНИКАЦИСЕН МИНИСТЕРСТВИН “ХЫПАР” ИЗДАТЕЛЬСТВО ÇУРЧĔ” ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН АВТОНОМИ УЧРЕЖДЕНИЙĔ**

**Директор – тĕп редактор В.В.ТУРКАЙ**

Чăваш ХĔРАРĂМĔ

**Çырăнмалли индекс: 11515**

**Редактор – М.М.ИЛЬИНА**

**Дежурнăй редактор – М.Р.ТУМАЛАНОВА**

**Хаçата Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен тытăмĕнчи тĕрĕслев службин 2013 çулхи апрель уйăхĕн 30-мĕшĕнче ПИ № ФС77-54016 номерпе регистрациленĕ.**



**РЕДАКЦИПЕ ИЗДАТЕЛЬ АДРЕСĔ:** 428019, Шупашкар хули, Иван Яковлев проспекчĕ, 13, Пичет çурчĕ

**ЫЙТСА ПĔЛМЕЛЛИ ТЕЛЕФОНСЕМ:** 55-07-21, 56-00-67, 56-03-54, 28-83-67, 28-85-33.

**Факс:** /8352/ 28-83-70, 56-20-07

**Электрон почти:** hypar@mail.ru



Хаçатри рекламăсăр тӳлевлĕ информаци материалĕсем “Реклама çинчен” Федераци саккунĕн 2 ст. килĕшӳллĕн **“Аталану çулĕпе”, “Ят-сум”, “Ĕç тата çын”, «Самана таппи»** рубрикăсенче пичетленеççĕ.

Номере 03.07.2015 алă пуснă. Пичете графикпа 19 сехет те 30 минутра алă пусмалла, 19 сехетре алă пуснă.
Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АО типографийĕнче пичетленĕ.
428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13.
56-00-23 – издательство директорĕ.
Тираж 7850. Заказ 2531.